Муркаш район хаçачě

# Çěнтерӳ ялавě

1944 çулхи çу уйăхěн 5-мěшěнчепе тухать

64 (8130) № * Шăмат кун, 2013 çулхи çурла (август) уйăхěн 31-мěшě * Хакě ирěклě

## Шăнкăрав «Конституци урокне» йыхравлě

***Ыран пирěн районта 3484 ача парта хушшине ларать. Малтанласа палăртнă тăрăх кăçал пěрремěш шăнкăрав 346 ачашăн янăрать. Пěрремěш класа каякансем Муркашри вăтам шкулта – 4 класс , Мăн Сěнтěрти вăтам шкулта 2 класс пулаççě.***

***Раççей Федерацийěн Конституцине йышăннăранпа 20 çул çитнине халалласа сентябрěн 2-мěшěнче кашни шкултах «Конституци урокě» иртет. Унта вырăнти хăй тытăмлăх органěсен депутачěсем те хутшăнма тивěç.***

***Çěнě вěренӳ çулěн малтанхи икě эрнинче çак урока малалла тăсса «Эпě Раççей гражданинě» ятпа право пěлěвěн кунěсем иртеççě: Конституципе тěллěнрех паллаштаракан класс сехечěсемпе калаçусем, тěрлě куравсемпе конкурссем.***

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Сентябрěн 1-мěшě – Пěлӳ кунě



**ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ХИСЕПЛĚ ÇЫННИСЕМ!**

Сире Пěлӳ кунěпе тата çěнě вěренӳ çулě пуçланнă ятпа чун-чěререн саламлатăп!

Çěнě пěлӳ илесшěн çунни, професси ăсталăхне лайăхлатса пыма, ăс-хакăл тата ӳт-пӳ тěлěшěнчен аталанма ăнтăлни – ку чухнехи пурнăçăн мěн пур тытăмěнче çыншăн ăнăçăвăн никěсě.

Чăваш Ен вěренӳ тытăмě тěрлě енлě аталаннă çынна пурнăç çулě çине тухмашкăн пулăшма тивěçлě. XXI ěмěр ыйтнипе килěшӳллěн мěн пур шайри вěренӳ учрежденийěсене анлă модернизаци пырать, пурлăхпа техника никěсě çирěплет, вěренӳ тата лаборатори оборудованийě çěнелет.

Çěнě вěренӳ çулěнче Чăваш Республикинче 1000 ытла вěренӳ заведенийě хăйсен алăкěсене уçать. Вěсенче 318 пин вěренекенпе студент, çав шутра пěрремěш класа каякан 13 пин ача пěлӳ илěç.

Юлашки 3 çулта шкулсен пурлăхпа техника никěсне çěнетме 3,5 млрд ытла тенкě хывнă. Çак вăхăтра юсав кирлě шкулсен 50 ытла процентне çěнě сăн кěртнě. Хуласенчи тата ялсенчи пысăк шкулсен столовăйěсене модернизацилеме 210 млн тенкě уйăрнă, çавна май çěнě вěренӳ çулěнче шкул ачисен 70 ытла процентě ку чухнехи оборудованипе хатěрленě паха апат çийě.

Юлашки икě çулта республикăра ача сачěсем анлăн тума пуçларěç. Строительство, юсав шучěпе тата ача сачěсенчи лаптăксемпе тивěçлипе усă курнипе 2011 – 2013 çулсенче çěнěрен 13610 вырăн уçăлнă. 2015 çулхи авăн уйăхěн 1-мěшě тěлне Чăваш Енре ача сачěсенчи черет ыйтăвне татса парěç.

Шанатăп: Чăваш Республикин вěренӳ тытăмě малашне те конкуренцие хутшăнма пултаракан, пысăк пěлӳллě тата культурăллă специалистсем хатěрлě.

Пурне те ырлăх-сывлăх, çěнě çитěнӳсем, пултарулăх ěçěнче ăнăçу, телей сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуçлăхě**
**М. ИГНАТЬЕВ.**

**ХИСЕПЛĚ ВĚРЕНТЕКЕНСЕМ, ШКУЛ АЧИСЕМ ТАТА ВĚСЕН АШШĚ-АМĂШĚСЕМ!**

Сире Пěлӳ кунě ячěпе тата çěнě вěренӳ çулě пуçланнă ятпа ăшшăн саламлатăп!

Авăн уйăхěн 1-мěшě – çулталăкри чи пěлтерěшлě уявсенчен пěри, мěншěн тесен паянхи кашни кун улшăнса тăракан пурнăçра пěлӳ пек шанчăклă пурлăх урăх çук. Çěнě 2013–2014 вěренӳ çулěнче шкул шăнкăравě парта хушшине ăс пухма пěрремěш хут 346 ачана чěнě. Шкул çулěсем ачасене çěнě пěлӳ парнелěç тата тěнчене тěлпевсемпе çитěнӳсем тума хавхалантарěç. Тарăн пěлӳ вара çитěнекен ăрăва пурнăç çулěпе малалла ăнăçлă утма пулăшě.

Çак савăнăçлă уяв кунěнче педагогсене ăшшăн тав тăватăп. Эсир – çут тěнчери чи пархатарлă професси çыннисем, чěресенче ырă çулăм чěртсе ăс-хал парнелетěр, пултарулăха аталантаратăр, ачасене тата çамрăксене ăса, ырра хăнăхтаратăр, тăван çěре тата наци культурине юратма вěрентетěр. Пиртен кашниех хамăрăн вěрентекенсене асра тытать, тав сăмахě калать.

Çак паллă кун сире пурне те – вěрентекенсене тата вěренекенсене, ашшě-амăшěсене çирěп сывлăх, телей, ěçре тата вěренӳре ăнăçу, çепěç кăмăллă пулма, ырă пуласлăха шанма сунатăп!

**Район администрацийěн пуçлăхě**
**Р. ТИМОФЕЕВ.**

## Тěп тěллев – çынсен пурнăç шайне лайăхлатасси

Пресс-конференци

**Августăн 23-мěшěнче Чăваш Республикин Наци библиотекинче Чăваш Ен Пуçлăхě Михаил Игнатьев массăллă информаци хатěрěсен представителěсем валли черетлě пресс-конференци ирттерни пирки пěлтернěччě. Республика Пуçлăхě юлашки виçě çул хушшинчи ěçсене пěтěмлетнě.**

«Должноçе ларнă пěрремěш кунах эпě Чăваш Ен Правительствин ěçě-хěлě республика çыннисен пурнăçне лайăхлатас тěллевлě пулě тесе пěлтертěм. Чăваш Ен Правительствин ларăвěнче вăл е ку программăна пăхса тухнă чухне эпě яланах çак ыйтăва паратăп: вăл ахаль граждансем валли мěнле ырлăхсем парать? Вăл е ку программа валли миçе миллион тенкě тăкаклани мар, унпа республика çыннисем конкретлă мěнле усă илни пěлтерěшлě», – палăртнă Михаил Игнатьев.

Чăваш Енре ěçсěрлěх ыйтăвěн çивěчлěхě палăрмаллах чакнă. Паян республика Атăлçи округěнче ěçсěррисен хисепне чакарассин хăвăртлăхěпе тата ěçе вырнаçтарасин шайěпе пěрремěш вырăн йышăнать.

Сывлăх сыхлавěн системине модернизацилеме питě пысăк укçатенкě хывнă. Республикăри больницăсенчен çуррине тěпрен юснă. Иртнě çул итогěсене тăрăх, федерацин Сывлăх сыхлавěн министерствин хаклавěпе, Чăваш Ен тӳлевсěр медицина пулăшăвě парассипе территорири программăна пурнăçлас енěпе чи лайăх регионсен йышне кěнě.

Халăхăн ырлăх-пурлăхне ӳстерес тата сывлăх сыхлавěн системине аталантарас енěпе пысăк ěç туса ирттернě. Çак ěç-хěлěн итогěсем – пěлтěр юлашки 20 çул хушшинче пěрремěш хут халăх йышě ӳснине регистрацилени.

2013 çулхи пěрремěш çур çул итогěсем тăрăх Чăваш Республики республикăн пěрлештернě бюджетне хамăрăн тупăшсем пырса кěнин хăвăртлăхěпе Атăлçи округěнче пěрремěш вырăн йышăнать.

Пушар хăрушсăрлăхě çине те тимлěх уйăрнă. Юлашки виçě çул хушшинче – 2011, 2012 тата 2013 çулсенче – пысăк пушарсем пулман. Паян республикăра экономикăпа политика лару-тăрăвě тăнăç. Граждансен обществăн пěлтерěшлě институчěсене – Общество палатине, çын прависем, ача прависем енěпе ěçлекен уполномоченнăйсене, предпринимательсен прависене хӳтěлессипе ěçлекен уполномоченнăйсене уйăрнă.

Сăмах май каласан пресс-конференци икě сехет çурă ытла пынă, журналистсем республика Пуçлăхне 30 ытла ыйту панă. Чăваш Ен Пуçлăхěн пресс-конференцийěнчен репортажсене телевиденипе тата радиопа трансляциленě.

Çамрăксем валли

## Стипендие тивěçме

Чăваш Республикинчи пултарулăхпа уйрăмах палăрса тăракан çамрăксемпе студентсене – 14 çул тултарнисенчен пуçласа 30 çулченхисене – ятарлă Указпа килěшӳллěн стипенди парса хавхалантараççě. Çак стипендие илес текенсем хушшинче вěренӳре ăнăçлă ěлкěрсе пыракансем, бизнес-проект хатěрлессипе, наука, пултарулăх, производство, ертсе пырас ěç енěпе çитěнӳ тăвакансем тата ытти сферăра тăрăшакан пултаруллă çамрăксем пулма пултараççě.

Пирěн район та хастар çамрăксемсěр мар. Çавăнпа та октябрěн 1-мěшěччен пур предприятисемпе организацисен, учрежденисен тата тěрлě органсен хăйсен коллективěсенчен республика Пуçлăхěн стипендине тивěçме пултаракан çамрăксен кандидатурисене тăратма май пур. Çакна валли ятарлă документсем хатěрлемелле. Документсене Шупашкарта вырнаçнă Çамрăксен пуçарăвěсен центрěнче, ачасен хушма пěлěвěн «ЮНИТЕКС» центрěнче, профиль министерствисемпе ведомствăсенче йышăнаççě. Кун пирки тěплěнрех район администрацийěн вěренӳпе çамрăксен пайěнче ыйтса пěлме пултаратăр.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Республикăра

## Грант – чи лайăххисене

Чăваш Енре республикări чи лайăх 30 педагога тата 20 вěренӳ учрежденине палăртнă. Вěсем республика Пуçлăхěн грантне тивěçеççě. Çакна çирěплетекен йышăнăва М. Игнатьев августăн 21-мěшěнче алă пусса çирěплетнě.

Педагогсен хавхалантарăвě 20 пин тенкěпе, учрежденисен – 200 пин тенкěпе танлашать. Чи лайăххисене хавхалантарас тěллевпе кăçал республика бюджетěнчен 4,6 миллион тенкě уйăрнă. Кăçалхи конкурсра 116 педагог тата 55 вěренӳ учрежденийě хутшăннă. Пирěн районти «Путене» ача садěнче вăй хуракан воспитатель Ирина Кожевникова та чи лайăх педагогсен йышне кěме пултарнă.

Йыхрав

## Ăмăртăва хатěр-и?

**«Çěнтерӳ ялавě» хаçат парнисене çěнсе илесшěн çитес шăмат кун, сентябрěн 7-мěшěнче, спорт ăмăртăвě иртterме палăртнă. Çак ăмăрту Чăваш Ен спортпа пресса фестивалěн 1-мěш тапхăрě шутланать. Унта çěнтерекенсем шăпах Шупашкарта иртекен асăннă фестивале хутшăнма тивěçěç.**

**Çулсеренех иртекен çăмăл атлетика эстафетинче кăçал та шкул ачисен тата аслисен командисен старчěсем пулаççě: вăтам шкулта тата тěп шкулта вěренекенсен командисенче 3 арçын ачапа 3 хěр ача, организацисемпе предприятисенчи, учрежденисенчи, ял тăрăхěсен, учительсен ěç коллективěсен командисенче 3 арçынпа 2 хěрарăм пулмалла. Пурте пěр пек дистанци чупаççě – 400-шер метр.**

**Мала тухнă командăсене парнесемпе дипломсем, медальсем кěтеççě. Вăтам тата тěп шкулсен çěнтерӳçě командисене – кусса çӳрекен кубоксем те. Пурне те стартра кěтетпěр.**

**Райхаçат редакцийě.**

Ыран – Нефть тата газ промышленноçěнче ěçлекенсен кунě

**НЕФТЬПЕ ГАЗ ПРОМЫШЛЕННОÇĚН ХИСЕПЛĚ ĚÇЧЕНĚСЕМ ТАТА ВЕТЕРАНĚСЕМ!**

Сире професси уявě ячěпе чěререн саламлатăп!

Эпир хăйсен пурнăçне пархатарлă тата питě кирлě отраслěпе çыхăнтарнă çынсене чыслатпăр. Пирěн çуртсенче яланах çутă та ăшă, промышленноçть, ял хуçалăх, пурăнмалли çурт-йěрпе коммуналлă хуçалăх объекчěсенче, шкулсемпе больницăсенче, Культура çурчěсенче те хăтла та тирпейлě. Çакă сирěн ěçри хастарлăххан, ăсталăххан, тивěçсене тӳрě кăмăллă пурнăçласа пынинчен нумай килет.

Эсир малашне те социаллă пурнăçпа экономика аталанăвне пысăк тӳпе хываса, ял çыннисен пурнăç условийěсене татах та лайăхлатса пырасса шанса тăратăп. Тěллеве пурнăçлассишěн çине тăни, ырми-канми ěçлени тата суйласа илнě профессие парăнни чи хăюллă тата хăйне евěрлě проектсене тӳрре кăларма май парасси пирки иккěленместěп.

Пурне те çирěп сывлăх, телей, ырлăх, иксěлми вăйхăват, çěкленӳллě кăмăл-туйăм сунатăп!

**Район администрацийěн пуçлăхě**
**Р. ТИМОФЕЕВ.**

Саламлатпăр

Пирěн юратнă, хаклăран та хаклă мăшăра, аттене, асаттене, кукаçие – Мулкачкасси ялěнче пурăнакан **Виталий Михайлович САЛЬНИКОВА** 75 çул тултарнă ятпа çав тери хисеплесе ăшшăн саламлатпăр. Çирěп сывлăх, вăрăм кун-çул сунатпăр.

**Саламлаканěсем: мăшăрě, хěрěсем, ывăлěсем, кинěсем, кěрӳшěсем, мăнукěсем.**

# Çу кунĕсенче те ĕç вĕрет

**Культура**

***Çуллахи каникул кунĕсенче шкулсенче вĕренекенсем пушă вăхăта усăллă ирттерчĕçĕр тесе районти библиотекăсем те пысăк калăпăшлă ĕç туса ирттерееççĕ. Çак ĕçе кăçал епле йĕркеленĕ пирки районти ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп библиотекăн йĕркелÿпе методика секторĕн заведующийĕ Елена РОМАНОВА каласа парать:***

– Çуллахи каникул кунĕсем валли библиотекăсенче ачасен вулавне, канăвне тата сывлăхĕсене çирĕплетессине йĕркелессипе ятарлă ĕç планĕсем туса хатĕрленĕ пулнă. Мероприятисене вĕсемпе килĕшÿллĕн йĕркелесе пынă.

Акă ачасен Муркашри тĕп библиотекинче июнĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса августăн 25-мĕшĕччен «Читаем вместе! Читаем вслух!» акци иртĕ. Унпа килĕшÿллĕн çуллахи вулавăн «Девчонки и мальчишки, читайте летом книжки!» программине туса хатĕрлерĕç. Вулакансем валли брошюра, ашшĕ-амăшĕ валли ятарлă памятка хатĕрленĕ. Ачасен библиотекинчех кĕнекесен иллюстраци выставки ĕçлерĕ. Уйрăм ушкăнсемпе уйăрса тухнă кĕнекесемпе ачасем интересленсе паллашрĕç.

Сосновка ял библиотекинче çăвĕпех «Летняя карусель» иллюстраци выставки ĕçлет, Чуманкасси ял библиотекинче «У книжек нет каникул» программăпа çуллахи вулав йĕркеленĕ, «Угадай сказочного героя» ятпа выставка-викторина, Ильинка ял библиотекинче чи нумай вулакан тата çĕнĕ кĕнекесен «Книжная лужайка» выставкине ирттернĕ.

Кашмаш ял библиотекинче «Летняя Игротека» йĕркеленĕ. Кунта энергипе тулнă, хаваслă тата пĕлÿшĕн çунакан ачасене тупма пулать. Кирлĕ литературăна тупма кăна мар, вăхăта интереслĕ ирттерме, калаçма, пĕтĕм çемьепе 18 сехетчченех канма та май туса панă. Шурча ял библиотекинче июлĕн 23-мĕшĕнче кĕçĕн çулхи ачасем валли «Сказки гуляют по свету» çул çÿрев вăййи ирттернĕ.

Çуллахи каникул кунĕсенче ачасене экологи, ăс-хакăлпа нравственноç, гражданла патриотика воспитанийĕ парас, сывă пурнăç йĕркине пропагандăлас тĕллевпе библиотекăсенче культурăпа массăллă мероприятисем йĕркеленĕ.

Ачасене хÿтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери кун июнĕн 1-мĕшĕнче ачасен тĕп библиотекинче вăй хуракансем ÿкерчĕксен «Радуга на асфальте» конкурсне ирттернĕ.

Июнĕн 5-мĕшĕнче библиотекăсенче экологи сехечĕсем иртрĕç. Вĕсене Тавралăха сыхламалли пĕтĕм тĕнчери куна халалланă.

Июнĕн 6-мĕшĕнче Раççейре çуллен Пушкин кунне паллă тăваççĕ. Ачасен тĕп библиотекинче, районти тĕп библиотекăра, Турай, Шурча ял библиотекисенче çак куна халалланă мероприятисем çуллĕ шайра иртрĕç.

Кирек епле халăхăн та яланах хăйĕн ырă йăлийĕркисене, традицийĕсене сыхласа хăварассишĕн, çирĕплетессишĕн тата аталантарассишĕн тăрăшасси воспитани ĕçĕн тĕп енĕсенчен пĕри пулса тăрать. Чăваш Республикин кунне халалласа кун пек мероприяти ачасен тĕп библиотекинче июнĕн 26-мĕшĕнче аван иртрĕ.

Республика кунне халалласах ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп библиотекăра июнĕн 3 – 20-мĕшĕсенче пултарулăх сочиненийĕсен конкурсне ирттернĕччĕ. Конкурса 15 ĕç тăратнă. Библиотекăсен вулавçисем пысăк активлăхпа палăрчĕç. Шурча ял библиотекин вулавçи Светлана Тимофеева, Турай библиотекин вулавçисем Анастасия Бычковăпа Мария Петрова тата ачасен тĕп библиотекин вулавçи Мария Филиппова çĕнтерÿçĕсем пулса тăчĕç. Чуманкассинчи Тамара Павловăпа Сыпайри Кристина Жиганова вара библиотекăн Тав çырăвĕсене тивĕçрĕç.

Июнĕн 27-мĕшĕнче Чуманкасси ял библиотекинче «Чувашия – мой край родной» темăпа литературăпа краеведени круизĕ пулнă. Участниксем вăйăна хутшăннă, викторина ыйтăвĕсем çине хуравланă.

Çул çитмен çамрăксене право пĕлĕвĕ парасси пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Çавна шута илсе Исетерккĕ ял библиотекинче июнĕн 24-мĕшĕнче право викторини йĕркеленĕ. Унта ачасен хăшпĕр ашшĕ-амăшĕ те хутшăнма кăмăл тунă. Право ыйтăвĕсемпе кун пек мероприяти июлĕн 12-мĕшĕнче ачасен районти библиотекинче те иртрĕ.

Июнĕн 26-мĕшĕнче Наркоманипе кĕрешмелли пĕтĕм тĕнчери куна паллă турăмăр. Çав кун ачасен библиотекинче кĕнекесен «Знать, чтобы уберечь себя!» выставкипе паллашма май пулнă. Мероприяти хыççăн ачасем «Игла – жестокая игра» видеофильм пăхнă.

Августăн 6-мĕшĕнче Йÿçкасси ял библиотекинче вулавçăсем валли литературăпа спорт уявне йĕркеленĕ. Ăна «Спорт – здоровье, движение – жизнь» ят панă. Уяв мероприятийĕсен шутĕнче викторина та, спорт конкурсĕсем те пулнă.

Июлĕн 8-мĕшĕнче Раççейре Çемье, юрату тата шанчăклăх кунне паллă тăваççĕ. Çавна халалласа Шетмĕпуç ял библиотекинче поэтика композицийĕ ирттернĕ. Унта шкул çумĕнчи çуллахи лагере çÿрекенсем пухăннă. Руçе тĕне кĕртнин кунĕ ячĕпе июлĕн 29-мĕшĕнче ял тăрăхĕсем хушшинчи библиотекăра ирттернĕ истори сехетне вара Муркаш шкулĕ çумĕнчи лагере çÿрекенсене явăçтарнă.

Августăн 2-мĕшĕнче ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп библиотекăн вулав залĕнче ирттернĕ историпе пĕлÿ сехетне академик, карапсем тăвакан Алексей Крылов çуралнăранпа 150 çул çитнине халалланă. Ачасем «Вокруг корабля» викторина ыйтăвĕсене хуравларĕç, хĕр ачасемпе арçын ачасен командисем пĕр-пĕрипе вăй висрĕç.

Август уйăхĕнче чылай библиотекăра «Киноканикул» иртрĕ. Ачасем тĕрлĕ кинофильмсем пăхма пултарчĕç.

Çуллен районта çамрăк вулавçăсем хушшинче «Лето, книга, я – друзья!» акци иртет. Унта Кашмаш шкулĕнчи Валерия Егорова, Муркаш шкулĕнчи Юлия Казакова, Анастасия Ярдыкова, Кристина Волкова активлă хутшăнаççĕ.

Августăн 28-мĕшĕнче «Прощай, лето, здравствуй, школа!» уяв мероприятийĕ пулчĕ. Унта каникул кунĕсенче иртнĕ «Читаем вместе! Читаем вслух!» акци итогĕсене те пĕтĕмлетрĕмĕр, çуллахи конкурссен çĕнтерÿçисене палăртрăмăр.

**Саламлатпăр**



Пирĕн юратнă, хаклăран та хаклă аннене, кукамая, асаннене, тăвана – Нискасси ялĕнче пурăнакан **Ира Николаевна КУМАШОВАНА** 65 çул тултарнă ятпа çав тери хисеплесе ăшшăн саламлатпăр. «Сеятель» хуçалăха вун пилĕк çул тултарсанах ĕçлеме кĕнĕ. Ĕмĕр тăршшĕпех, пенсие тухиччен çав хуçалăхра вăй хунă. Яланах малтисен ретĕнче пулнă.

Эсĕ пурри – пирĕншĕн нимĕнпе висейми пуянлăх, савăнăç, телей. Турри сана вăй-хал парса тăтăр, чир-чĕртен упратăр.

**Салампа: 2 хĕрĕ, ывăлĕ, кĕрÿшĕсем, кинĕ, 6 мăнукĕ, сывăх тăванĕсем.**



Хаклăран та хаклă, юратнă мăшăра, хаклă аттене, асаттене, хăтана, ырă кăмăллă тăванăмăра – Москакасси ялĕнче пурăнакан **Геннадий Георгиевич ВОЛКОВА** 65 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Тавах сана ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн, пирĕн ыратусене хăвăн витĕр кăларнăшăн. Сывлăху санăн çирĕп пултăр, вăрăм ĕмĕр, канлĕ ватлăх сунатпăр. Пире, висĕ ачине, ура çине тăратнăшăн, ылтăн аллусемшĕн тав сăмахĕ калатпăр. Эпир сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр, нумай-нумай пурăнма сунатпăр. Нихăçан та ан чирле, эсĕ пурри – пирĕншĕн питĕ пысăк телей, савăнăç.

**Салампа: мăшăрĕ, икĕ ывăлĕ, хĕрĕ, икĕ кинĕ, висĕ мăнукĕ, мĕн пур тăванĕ, кÿршисем.**

**Райадминистрацире**

## Хисеп грамотипе наградăланă

***Район администрацийĕн 2013 çулхи августăн 20-мĕшĕнчи 883 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

1. Çитĕнекен ăрăва пĕлÿ тата воспитани парассинче ăнăçусем тунăшăн тата нумай çул ÿсĕмлĕ ĕçленĕшĕн:

- Ярапайкассинчи вăтам шкулти информатика вĕрентекенне **Сергей Георгиевич ВАСТЕЕВА**;
- Турайри вăтам шкулти пуçламăш классене вĕрентекен **Римма Вячеславовна ИВАНОВĂНА**;
- Шурчари тĕп шкул çумĕнчи шкулччченх «Дюймовочка» ушкăн воспитательне **Роза Ивановна ИВАНОВĂНА**;
- Муркашри вăтам шкулта вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекен **Алина Георгиевна ПАЛАДЬЕВĂНА**;
- Вăрманкассинчи пуçламăш шкул-ача сачĕн директорне **Галина Леонидовна ПЕГАСОВĂНА**;
- Муркашри вăтам шкулта вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекен **Ольга Владимировна ПЕТРОВĂНА**;
- «Василек» ача сачĕн воспитательне **Раиса Алексеевна ПЕТРОВĂНА**;
- Катькасри пуçламăш шкул-ача садĕнче пуçламăш классене вĕрентекен **Анжела Витальевна САЛЬНИКОВĂНА**;
- Юнкăри вăтам шкулта пуçламăш классене вĕрентекен **Лидия Георгиевна САМУШКОВĂНА**;
- Муркашри вăтам шкулта историпе обществознани вĕрентекен **Людмила Геннадьевна ФЕДОРОВĂНА**;
- Москакассинчи вăтам шкулти библиотекаре **Галина Аверьяновна ТИМОФЕЕВĂНА**.

2. Индивидуаллă предпринимателе **Венера Семеновна ОСИПОВĂНА** – районти пĕчĕк тата вăтам предпринимательствăна аталантарма тÿпе хывнăшăн.

# Юратнă вĕрентекен

**(Малалли. Пуçл. иртнĕ номерсенче).**

Урасенче камăн – туфли, камăн – ботинка. Пальто пурин те пулнă. Октябрьски районне каймалла терĕç. Темиçе сухрăм кайсан канма чарăнтăмăр, çиме лартăмăр. Преподавательсем кăмакана пăрахса пĕçернĕ çĕр улми кăларса хучĕç, эпир, айвансем, тухса килнĕ чух çĕр улмине тула, юр çине кăларса тăкнă, хамăр кăмака хутнă, ăна пĕçерсе çиме тăн çитмен. Пĕр яла çитсен (ятне маннă) пилĕк хĕр ачана пĕр пĕчĕк пÿрте вырнаçтарчĕç. Ку килте ватă старик, кинĕ икĕ ачапа пурăнатчĕç. Колхоз йĕтемĕ çинчен улăм илсе ашăк çыхрăмăр та урайне сарса çывăрма выртрăмăр. Ирпе тăрсан юлашки çăкăра çирĕмĕр те 2 – 3 çухрăм тăршшĕ траншея чавма кайрăмăр. Унта кĕреçесем, наçилккасем илсе пырса хунă. Танксене тытса чармалли траншейăсем чавмалла пулнă. Тарăншĕ 3 метр ытлаччĕ, сарлакăшне астусах каймастăп. Хĕвел анăç енчен – сĕвек, Хĕвел тухăçĕнчен – чăнкă, танк килсен анасса лайăххах анать, анчах малалла каяймасть.

**Пурнăç çулĕ**



Çăпатасем шăтрĕç. Стипенди укçи пур, анчах урана мĕн сырмалла? Тепĕр кунне пăхатпăр та, преподавательсем утиял пуçĕсене татнă та урисене сырса лартнă. Эпир те татрăмăр та сыртăмăр. Вара пирĕн утиялпа диагональпе витĕнмелле пулчĕ. Преподавательсен темиçе утиял та пулнă.

Çăпатисем икĕ хутлă анчах пулнă, вĕсем часах çĕтĕлетчĕç. Вара улăм хураттăмăр – пусĕнчен, хыçалтан. Ĕçе ирхи 7 сехете тухмалла, каçхи 7-ре ĕç пĕтермелле. Кунĕ кĕскелсе пынипе ирпе те, каçпа та тĕттĕмччĕ. Тăприне чавса наçилккасем çине тиесе траншейăран тухса аяккалла кайса тикĕс сарса хумалла пулнă. Çитересси – шăн çĕр улмипе купăста ярса пĕçернĕ яшкаччĕ.

Эпир пурăннă ялта çурт тумалли пура пурччĕ, çавăнта пысăк хуранпа пĕçеретчĕç. Кил хуçисен витрине илсе пыраттăмăр, яшки кил хуçисем валли те юлатчĕ. Кăнтăрла уйра пысăк хуранпа çĕр улми пĕçеретчĕç: икĕ çĕр улми тата тăварланă çур хăяр паратчĕç.

Çăкăрне пире валли пĕр хĕрарăм пĕçеретчĕ, чустине çăнăх чыхса тултаратчĕ (формăпа пĕçермен, кĕреçе çине хурса кăмакана чикмелле-çке, хытармасан кĕреçерен уйрăлмасть). Вара çав çăкăра валеççе паратчĕç, висĕпе – 800 грамм. Кассан кĕрпе пек тĕпренетчĕ. Çав çăкăра виççе пайлаттăмăрччĕ, ирпе кăнтăрлахинчен кăштах касса илеттĕмĕрччĕ, кăнтăрла – каçхинчен, каçхи валли вара пĕр-ик турам анчах юлатчĕ.

Çăпата çĕтĕлсе кайсан бригадира каларăм (Ф. Нечай – историпе вĕрентекен):

– Манăн пасара каймаллаччĕ.

– Мĕн тума?

– Пушăт илме.

– Пушăчĕ мĕн тума кирлĕ?

– Çăпата саплама.

– Пĕлетĕн-и?

– Пĕлетĕп.

– Юрать. Бригада валли çимелллисем илмелле, лашапа каятпăр, – терĕ бригадир.

Кайрăмăр, вăл çимеллисем илчĕ, эпĕ – пушăт пĕр çыхă. Хĕрсем пĕри те пушăт туса çăпата сапласа курман. Шÿтертĕмĕр, мĕн сарлакăш кирлĕ пек пушăт турăмăр. Шĕшлĕ пĕрре çеç, черетпе çавранать. Пĕр каç пĕр çăпатине саплаăм, тепĕр каç – теприне. Çав тери хĕпĕртерĕм: ман ура – ăшăра. Ман пек телейли никам та çук тесе шутларăм.

Çанталăк питĕ сивĕччĕ, сывлăш температури 40 градуса çитнĕччĕ. Пирĕн отрядра пурте чăвашсемччĕ. Пире куçса çÿрекен ялав, 200 тенкĕ укça пачĕç. Пирĕн бригадир (4-мĕш курс студенчĕ) ялав илме траншейăран тухрĕ, сăмах калана хушăра питне тăм илсе ячĕ. Çапла эпир ноябрь уйăхĕнчен пуçласа январь çурриччен ĕçлерĕмĕр. Пĕр лини пĕтерсе тепĕр лини чавма шăн тăприне илсе пĕтерсен, Мускав патĕнче наступлени пуçлансан, урăх вара чавтармарĕç.

Ĕçленĕ чух колхозниксем кăвайт чĕртетчĕç, траншейăçăр пуçне вĕсем çĕр пÿртсем тăватчĕç. Çав вăхăтра Шупашкар хули çине бомбăсем пăрахнă. Симĕс пасар çывăхĕнче милици çурчĕ пулнă, çавăн çине бомба ÿкнĕ. Шупашкарти пристань çине, Атăл хĕррине бомбăсем пăрахнă, Карл Маркс урамĕ тăрăх пулеметран çулса тухнă.

**(Малалли пулать).**

**О. ВИШНЕВА,**
**Шатракассинчи пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан тĕп шкул учителĕ.**

**Сăн ÿкерчĕкре: В.С. Замкова хăйĕн вĕренекенĕсемпе.**

# Пукрав инçе теççĕ-ши?

**Пирĕн рейд**



Выльăх-чĕрлĕх усраканшăн хĕрӳ тапхăр пырать. Халĕ вăл хĕле хатĕрленессипе тимлет, май пур таран апат çителĕклĕ янтăлама тăрăшать, витесарайсенче юсав ĕçĕсем ирттерет. Вăхăчĕ вара пире кĕтмест, кунран-кун сивĕ еннелле сулăнать. Хăшĕ-пĕри хĕвел çӳлте, Пукрав инçе тесе шухăшлать пулас.

Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенчи фермăсене хĕле хатĕрлессипе уйăхлăх пынă май рейд ушкăнĕ тĕваттăмĕш тĕрĕслеве çула тухрĕ. Çак ĕçе пурнăçлакансем хушшинче район администрацийĕн экономика тата АПК аталанăвĕн пайĕн тĕп эксперт специалисчĕ Т. Алексеева, выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станци врачĕ Г. Спаскин, патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕн аслă инспекторĕ К. Попов пулчĕç.

Юн кун, августăн 28-мĕшĕнче, вырансенче обществăлла выльăх-чĕрлĕх фермисене хĕле хатĕрлессипе паллашма чи малтанах «Оринино» хуçалăха çитрĕмĕр. Патаккассинчи майракаллă шултра выльăх ферминче пултăмăр. Хĕрӳ ĕç шавĕ шăпланнă пулин те, кунта тăрăшакансем тата хуçалăх ертӳçи Ю. Шишокин вырăнтахчĕ. Вăл çакăнти ĕç-хĕлпе кулленех кăсăкланать, сĕт илесси ĕне чĕлхи çинче пулнине яланах асра тытать. Асăннă фермăра 205 пуç ĕне тăрать, вĕсем валли 250 тонна ытла утă, 350 тонна улăм янтăланă. Çавăн пекех силос та çителĕклĕ темелле. Тăрăшуллă коллективăн ял хуçалăх ĕçĕпе çыхăннă тĕрлĕ ыйту пирки калаçмалли сахал мар пулчĕ.

Ферма территорине çитсенех кунта тирпейлĕх тата ĕçе кирлĕ пек йĕркелени, тĕрĕсрех каласан, объекта хĕле хатĕрлени аванах курăнчĕ. Картишĕнче, кашни пӳлĕмре чечек ешерет. Информаци стендне çĕнетсех тăраççĕ. Хуçалăх ĕç-хĕлĕ – ыттисемшĕн ырă тĕслĕх, вăл шултра продукци пахалăхĕ те.

Çул çӳрев пире «Восток» хуçалăха та илсе çитерчĕ. Эпир пулнă пĕрремĕшпе иккĕмĕш хуçалăха танлаштарсан, вĕсене çĕрпе пĕлĕт тейĕн. Ферма территорийĕнче çын сӳллĕш çум курăкĕ ешерет, йĕркеллĕ хупăнакан алăк та çукпа пĕрех. Сарай стени йăтăнса анăччĕ, тăрри шăтăкчĕ, шалта тăракан пĕчĕк пăру кĕтĕвĕ каççерен çӳл тӳпери çăлтăрпа киленет. Умра вара – хĕл кунĕсем. Кашни кĕтесрен, маччаран ярăм-ярăм шăнаэрешмен карри тăсăлать.

– Тĕкĕнме хăратпăр, атту стенасем йăтăнса анма пултараççĕ, хĕл кунĕсем пирки вара шухăшлама та хăратпăр, – пулчĕ хурав кунта ĕçлекенсен.

Паллах, вĕсен кăмăлĕ хуçăк. Пĕтĕмĕшле илсен асăннă хуçалăх хĕле хатĕрленессипе нимĕн те туман темелле. Сумалли ĕне хисепĕ 60 ытла. Ферма ĕçченĕсен калаçăвĕнчен хуçалăх ертӳçи канура пулнине пĕлтĕмĕр.

Малалла утатпăр. Осеменатор пӳлĕмĕ пулчĕ-ши ку, е..? Сĕтел çинче – препарат савăчĕ тата ытти япала, вĕсем хушшинче кушак çури хуçаланать. Кунта тирпей-илем пирки, паллах, нихăçан та илтмен те ĕнтĕ, çакна валли хуçалăх ертӳçи кирлĕ мар вĕт. Тепри вара кану пӳлĕмĕ пулас. Сивĕтмĕш алăкĕ йăтăнса аннă, унтах çимелли те курăнать, ăшчикĕ вара урайпа пĕр тĕслĕ. Коллектив ĕç-хĕлне çутатакан стенд кивĕ ĕнтĕ. Ку йышши калаçăва малалла тăсмăп та.

«Герой» хуçалăх ферминче пулма тӳр килчĕ. Кунта юсав ĕçĕсем пыраççĕ, тимлемелли сахал мар, вăл шутра осеменатор пӳлĕмĕнче те. Дезинфекци туман.

Я р а п а й к а с с и н ч и юхăннă ферма территорийĕнче «пăр вырăнтан тапранни» курăнчĕ. Кунта пуçарулла пĕр фермер кайăк-кĕшĕк ĕрчетме тытăннă. Халĕ юсав тата документ хатĕрлес ĕçсем пыраççĕ. Çитес вăхăтра кунта ăратлă кайăк-кĕшĕк валли икĕ яруслă сарай хута кайĕ.

Муркашри чăх-чĕп фабрикинче хĕрӳ ĕç тапхăрĕ пыратчĕ. Уй-хиртен тырă çапса турттараççĕ. Пĕтĕм лаптăк калăпăшне илсен выльăх апачĕ пысăк йышлă чăх-чĕпшĕн çителĕксĕр. Çавăнпа та меллĕ самантпа усă курса ăна ытти регионтан турттараççĕ. Хĕл кунĕсем асăннă хуçалăха чăрмав кӳмессе шанас килет.

– Тырă склачĕсене çĕнетрĕмĕр. Кăçал икĕ объект реконструкцилерĕмĕр, модернизаци ыйтăвĕ те кунта тĕпре тăрать. Оборудовани çĕнетни продукци калăпăшĕ тата пахалăхĕ çине пысăк витĕм кӳрет. Продукци тĕрлĕ региона ăсанать, – паллаштарчĕ кунти ĕçхĕлпе генеральнăй директор тивĕçĕсене пурнăçлакан Сергей Шпарев.

Тĕрĕслев малалла пырать.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Ыран – Нефть тата газ промышленноçĕнче ĕçлекенсен кунĕ**

# «Кăвак çулăм» ырлăх кӳтĕр

Кирек ăçта ĕçлекенĕн те хăйĕн професси кунĕ пур. Çапла вара сентябрĕн пĕррремĕш вырсарни кунĕнче йăлана кĕнĕ йĕркепе Раççей Федерацийĕнчи нефть тата газ промышленноçĕнче ĕçлекенсем хăйсен професси уявне паллă тăваççĕ. Пирĕн районшăн та çак уяв пĕлтерĕшсĕр мар, мĕншĕн тесен Муркаш енĕн ытларах пайĕ паян çут çанталăк газĕпе тухăçлă усă курать.

Район çыннисем, хамăр енри предприятиорганизацисем, автомашина хуçисем юлашки çулсенче йăлара тата производствăра çут çанталăк газĕпе усă курассине пурнăçра тĕп вырăна кăларчĕç. Газ кӳрекен çăмăллăхсăр эпир паян, тĕрĕссипе, хамăр пурнăça курмастпăр та. Муркаш енре çут çанталăк газĕпе çыхăннă ĕçсене пурнăçлакан тĕп организаци – «Чăвашсетьгаз» усă акционерлă обществăн «Моргаушимежрайгаз» филиалĕ. Яваплăха туйса ĕçлекен газовиксем хăйсен ĕçĕнче сиксе тухакан кирек хăш ыйтăва та вăхăтра тата туллин пурнăçлассине пĕлтерĕшлĕ пулăм тесе шутлаççĕ. Çак тĕллевпе куллен ĕçе тухаççĕ.

– Сире тата эсир ертсе пыракан коллектива çывхаракан уявпа саламлатăп. Унпа пĕрлех районăмăр иртнĕ çулсенче республикăра ялсене çут çанталăк газĕ кĕртессипе ыттисенчен ăнăçуллăрах ĕçлени сирĕн ĕç çине те яваплăх хушрех пулĕ, – сăмах пуçартăм «Чăвашсетьгаз» усă акционерлă обществăн «Моргаушимежрайгаз» филиалăн директорĕпе Решит Чебеновпа тĕл пулсан.

– Саламланăшăн тавах. Ĕçĕ вара чăнах та нумай, хамăр çине хунă яваплăх пысăккине самантлăха та манмастпăр. Пурнăç малалла аталаннине йывăрлăх теес килмест. Çакна ăнланса, пĕрпĕрне пулăшса ĕçлетпĕр. Пирĕн ĕç пĕтĕмĕшле ял пурнăçне лайăхлатассипе çыхăнни тăрăшуллăрах пулма хистет. Тувсири инкек пирĕнтен пăрăнса иртĕр тесе тăрăшатпăр. Кунпа пĕрлех Раççей Федерацийĕнче тата Чăваш Республикинче ялсене аталантарассипе йышăннă программăсене пурнăça кĕртессинче те эпир хамăр пай пуррине ăнланатпăр, хамăртан мĕн килнине пĕтĕмпех вăхăтра та пахалăхлă тума тăрăшатпăр, – хуравларĕ Решит Халиуллович.

**КĔСКЕ СПРАВКА.** «Моргаушимежрайгаз» филиал Муркаш районĕнче çеç (филиал пирĕн район Етĕрне тата Хĕрлĕ Чутай районĕсенчи газ участокĕсемпе пĕрлештерсе тăнăран кăтартусем татах та пысăкрах) 870 километр ытла газ пăрăхĕсем пăхса тăрать. Кунпа пĕрлех хамăр енре 224 ГРП тата ШРП ĕçленине, 11634 килпе хваттерте çут çанталăк газĕпе усă курнине, 148 коммуналлă йăла предприятийĕпе 3 промышленность тата 9 ял хуçалăх объекченчи котельнăйĕсенче, районти автогаз заправка станцийĕнче газпа епле усă курнине алăра тытасси те – унăн тивĕçĕ. Муркаш енри 77 çынлă ĕç коллективĕ шаннă ĕçсене пĕлсе йĕркелесе пынипе нихăçан та паянхи ĕçе ырана хăвармасть.

Ертӳçĕ сăмахĕнчен асăннă филиалăн кулленхи ĕçĕ нумайăи паларчĕ. Район çыннисем çут çанталăк газĕпе усă курмалли правилăсене пăсмасан ялсенче те, предприятиорганизацисенче те «кăвак çулăм» çынна сиен кӳмĕ, ăна пула чрезвычайлă лару-тăру сиксе тухмĕ, пушар алхасмĕ, çынсем шар курмĕç, «Моргаушимежрайгаз» филиал ĕçченĕсем те паркавлă çула тухмĕç.

Пирĕн калаçу ветерансемпе паян ыттисемшĕн тĕслĕх пулакан ĕçченсене те иккĕмĕш вырăна хăвармарĕ. Райгазăн пĕрремĕш пуçлăхĕ В. Егоров, И. Соловьев тĕп инженер, ПТО пуçлăхĕнче 10 çул ăнăçлă ĕçленĕ Г. Абросеев, ПТО инженерĕ Ф. Шарапов, П. Митрофанов водитель, Ю. Филиппов, Р. Сергеева, Ю. Сорокин, А. Казамбаев, Э. Голубев, Г. Алексеев, Е. Колбасова ĕçченсем паян – ыттисемшĕн ырă тĕслĕх.

– Етĕрнери тата Хĕрлĕ Чутайри газ участокĕсенче вăй хуракансемпе пĕрле филиалта 171 çын ĕçлет. Ĕçне пĕрле тăватпăр та никама та уйăрса калас килмест. Кашниех хăйне шаннă ĕçре – ответлă специалист. Района газификацилесе пĕтерес ĕçе тӳпе хывнисем те, паян ку ĕçе пăхса тăракансем те, пирĕн йышра ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнисем те, нумай çул газ хуçалăхĕнче вăй хуракансем те, вĕсен çемйисем те уяв саламне тивĕç. Ăнăçу пултăр пурне те, – вĕçлерĕ хăйĕн сăмахне Р. Чебенов.

Уяв ячĕпе сире! Куллен ĕçе сывлăхпа тухса килсене телейлĕ таврăнни пурсăран та пурнăç илемĕ пултăр!



Фаина Ильинична Полякова райгазра 1991 çултанпа вăй хурать. Малтанхи çулсенче диспетчер пулса ĕçленĕскер, хальхи вăхăтра – склад заведующийĕ. 3 ача амăшĕ ĕçри ответлăха çирĕп туять.



«Чăвашсетьгаз» усă акционерлă обществăн «Моргаушимежрайгаз» филиалĕнче ĕçлекен М. Николаевпа В. Петров газоэлектросварщиксем тата И. Яковлев водитель (сăн ӳкерчĕкре сулахайран сылтăмалла) черетлĕ ĕçре. Яваплăха туяканскерсем Раççейри нефть тата газ промышленноçĕнче ĕçлекенсен кунне пуçарулăхпа тата ĕçри хастарлăхпа кĕтсе илеççĕ.

**А. БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Çул-йĕр çинче

# Ырантанпа – çирĕпрех йĕркепе

«РФ Административлă право нормисене пăснин кодексне кĕртнĕ улшăнусем сентябрĕн 1-мĕшĕнчен вăя кĕреççĕ. Çул-йĕр хăрушсăрлăх правилисене пăсакансен сахалтан та 500 тенкĕ штраф тӳлеме тивет», – пĕлтерчĕ çĕнĕлĕхсемпе паллаштарнă май патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн районти тĕп инспекторĕ С. Иванов.

Çуран çӳрекене е пассажира çул-йĕр правилисене пăснăшăн малашне 500 тенкĕ штраф парса явап тыттарĕç.

Водитель руль умĕнче пынă чух ятарлă техника хатĕрĕсĕр телефонпа калаçать пулсан, унăн хăйĕн çумĕнче 1500 тенкĕ пулмаллах.

Транспорт хатĕрĕпе çӳремелли права çуккине пăхмасăрах руль умне ларса çула тухнăшăн 5000–15000 тенкĕ чухлĕ штраф пама пăхса хунă.

Эрех-сăра ĕçнĕ хыççăн машинăпа е урăх транспорт хатĕрĕпе çула тухни вара питĕ хакла ларать: 30 пин тенкĕ штраф тата çулталăк çурăран пуçласа икĕ çулччен транспорт хатĕрĕпе çӳреме ирĕк паракан праваран хăтараççĕ; çак йĕркене тепĕр хут пăссан 50 пин тенкĕ штраф параççĕ тата 3 çуллăх праваран хăтараççĕ.

Праваран хăтарнă водитель руль умне ларса çула тухнăшăн та административлă явап 30 пин тенкĕ штрафпа танлашать е 15 талăк таран арест, е 100–200 сехет чухлĕ обязательнăй ĕç.

Çĕнĕ йĕркепе килĕшӳллĕн водителĕн сывласа кăларнă пĕр литр сывлăш юнра таса этил спирчĕ 0,16 миллиграмм чухлĕ тата ытларах пулсан руль умне ларма юрамасть.

Правасăр çынна е унран хăтарнă çынна транспорт хатĕрĕ шанса парса çула тухни те 30 пин тенкĕне кайса ларать.

Тепĕр саманта та шута илмелле. Праваран хăтарнă тапхăр вĕçленсен водителĕн правана алла илме çул-йĕр правилисене пĕлнине çирĕплетсе пама тивет. Праваран хăтарни маларах водитель ӳсĕр пулнипе е медицина тĕрĕслевне тухма килĕшменнипе çыхăннă пулсан, права илес умĕн тухтăр патĕнче те пулма тивĕ.

Часах вĕренӳ çулĕ пуçланать. Нумай ашшĕ-амăшĕ хăйсен ачисене шкула е ача садне машинăпа леçет. Çапла чух ятарлă креслосемпе е тытса тăракан хатĕрсемпе усă курмасан вара сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа ашшĕ-амăшĕн 1 пин тенкĕ кăларса хумалла пулĕ.

Аса илтеретпĕр, ноябрь уйăхĕнчен пуçласа скутерпа тата мопедпа çӳреме те права кирлĕ пулать.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

# Рекордные девять лет

**В Чувашию «МегаФон» пришел 9 лет назад, 17 августа 2004 года – одним из последних среди сотовых операторов. Однако к делу компания приступила серьезно. В первый же день в Чебоксарах был поставлен всероссийский рекорд — SIM-карты «МегаФона» подключили 5012 абонентов. Добиться такого же результата пока не удалось никому. В свой день рождения оператор подвел итоги работы в республике и вручил подарки самым верным и активным абонентам.**



На торжественном мероприятии директор компании «МегаФон» в Чувашии Елена Исайкина напомнила журналистам и абонентам об основных событиях, которые в Чувашии «МегаФон» совершил. Всего через четыре месяца после исторического рекорда связь от «МегаФона» появилась во всех районах республики. В 2006 году компания первой запустила на всех базовых станциях технологию EDGE – скорость мобильного интернета превысила 200 Кбит/с. 2007 год ознаменовался стартом проекта «Тотальный контроль качества». «Мы первыми в Чувашии стали использовать информацию о работе сети, поступающую от наших абонентов, – подчеркнула Елена Исайкина. – Эта работа продолжается и сейчас».

В 2008 году компания выступила поставщиком мобильной связи для XXIII Кубка Мира по спортивной ходьбе, который прошел в Чебоксарах. А в 2009-м столица Чувашии получила от «МегаФона» подарок – скульптурную композицию «Корабль будущего». Его установили в речном порту. Это была первая Легенда «МегаФона» – сейчас необычные арт-объекты установлены оператором практически во всех крупных городах Поволжья.

В 2010 году именно «МегаФон» первым среди операторов запустил в коммерческую эксплуатацию сеть 3G. А еще через два года – связь нового поколения, 4G. Средняя скорость интернета в сети «МегаФон» достигла 30-40 Мбит/с. Достичь отличного качества связи удалось благодаря проведенной в 2011 году тотальной модернизации всей технической части.

Социальную ответственность компании и ее участие в некоммерческих городских и республиканских проектах отметила министр информационной политики и связи ЧР Валентина Андреева. За 9 лет «МегаФон» провел более 990 мероприятий, многие из них – в сотрудничестве с разными министерствами нашей республики. Жители Чувашии оценили качество связи от «МегаФона», и сегодня в республике у оператора уже более 640 тысяч абонентов. В честь 9-летия компания вручила девяти самым преданным и активным клиентам подарки и дипломы. Звания «Выдающегося абонента» удостоилась Нина Саляева. Она подключилась к «МегаФону» в первый день работы компании в регионе, 17 августа 2004 года, в среднем разговаривает по телефону 1 300 минут в месяц (то есть 22 часа). Общается с двумя детьми и подругами – все они подключены к «МегаФону».

Владимир Степанов отмечен в номинации «Рекордсмен сообщений». За один месяц он отправляет в среднем 3 000 SMS и MMS.

Среди активных пользователей мобильного интернета третьего поколения победителем стала Екатерина Миловидова. Ее любимое занятие – онлайн-игры на мобильном телефоне, на что она тратит примерно 1 Гб в месяц. Екатерине досталась победа в номинации «3G-эксперт». Чемпионкой по объему потребляемого трафика в сети третьего поколения признана Ольга Калашникова: ежемесячно она скачивает 75 гигабайт трафика. Чебоксарка Марина Храмова стала победителем в номинации «Международный абонент»: путешествуя за границей, она наговаривает по телефону более 1 000 минут в месяц.

В номинации «Надежная связь» награду получили супруги Сергей и Инга Солины, которые стали первой семейной парой среди абонентов компании. На протяжении всех девяти лет они пользуются услугами «МегаФона». Впереди у «МегаФона» – новые рекорды. Юбилейный 10-й год, уверены в компании, даст еще много новых поводов для радости и тем, кто давно пользуются мегафоновской связью, и новым абонентам.

Ял тăрăхĕсенче

# Кичем пулмарĕ никама та

Çамрăксен кунĕ иртсе кайнă пулин те, Москакасси çамрăкĕсем августăн 24-мĕшĕнче хăйсем валли уяв йĕркелеме шутларĕç. Асăннă кун Москакасси шкулĕн стадионĕнче çак ял тăрăхĕнчи ялсенчи тата Муркашри спорта юратакансен ушкăнĕсем чылай пухăнчĕç. Д. Гаврилов тата А. Федоров тренерсем çак командăсем хушшинче тĕрлĕрен спорт вăййисемпе ăмăртăвĕсем ирттерчĕç. Çамрăксем футболла, волейболла выляссипе, кире пуканĕ çĕклессипе, инçете перессипе, чупассипе т. ыт. те вăй виçрĕç.

Ушкăнсем хушшинче пултаруллисем те палăрчĕç. Рыккакассисен ушкăнĕ 3-мĕш вырăна, Москакасси çамрăкĕсем 2-мĕш вырăна, «Передовик» хуçалăх ушкăнĕ 1-мĕш вырăна çĕнсе илме пултарчĕç. Çĕнтерӳçĕсем медальсемпе Тав çырăвĕсене тата хаклă парнесене тивĕçрĕç. Ăмăртусен аслă судйи А. Рыжков çамрăксене малашне те спортпа туслă пулма сĕнчĕ, тав сăмахĕ каларĕ.

Ачасемсĕр мĕнле уяв-ха вăл? Оринин ял тăрăхĕнчи М. Игнатьев предприниматель батут вырнаçтарчĕ. Мăн Сĕнтĕр тата Муркаш райповĕсен сутуçисем тутлă апат-çимĕçпе, теттесемпе савăнтарчĕç.

Спорт вăййисем вĕçленнĕ хыççăн суту-илӳ çурчĕ умĕнче савăнăçлă уяв пуçланчĕ. Уява уçма вара Москакасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А. Матросов сăмах илчĕ, çак кунпа пурне те саламларĕ, уява хаваслă ирттерме сĕнчĕ. Уяв саламĕн сăмахĕсене район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Л. Тарасова, «Передовик» хуçалăх ертӳçи Н. Царев, Москакасси шкулĕн директорĕ И. Иванов та тухса каларĕç. Москакасси ял тăрăхĕ ячĕпе Москакассинчи чи çамрăк мăшăра Ксенияпа Николай Касеевсене çемье чăмăртанă ятпа саламласа Тав çырăвĕпе асăнмалăх парне парса чысларĕç.



Çавăн пекех «Заря» ООО ертӳçи П. Терентьев тăрăшнипе «Колокольчик» ача садне çӳрекенсем хушшинче лотерея вылявĕ туса ирттерчĕç. Чи телейлĕ 10 ача 500-шер тенкĕлĕх сертификат хуçи пулса тăчĕ. Ку сертификатпа ашшĕ-амăшĕ «Карамелька» магазинра ачисем валли тĕрлĕ хатĕр туянма пултарĕ.

Уява хăт кĕртекенсем Шупашкартан килнĕ Д. Мани, И. Шинжаева, П. Борисова, А. Выйгетова тата Москакассинчи тĕслĕх ташă ушкăнĕ «Калинка», М. Кондукторова ташăçă тата «Фрик-шоу» ушкăн пулчĕç. Уяв программине А. Волковăпа Р. Семенов çав тери ăста ертсе пычĕç.

Уявра вара чи кĕтнĕ парне – фейерверк пулчĕ. Мĕн тĕрлĕ илемлĕ çутăпа çиçмерĕ пулĕ çӳл тӳпе!

Паллах, пулăшакансем пулмасан çакăн пек уяв йĕркелеме май çукчĕ. Пĕтĕм ял-йыш ячĕпе вĕсене тав сăмахĕ калатпăр. Чи малтанах Москакасси ял тăрăхĕн пуçлăхне А. Матросова, «Заря» общество ертӳçине П. Терентьева, Э. Мостов предпринимателе, «Передовик» хуçалăх ертӳçине Н. Царева, «Хантымансийскдорстрой» организацие, Мăн Сĕнтĕр райповне, В. Васильев предпринимателе, «Моргаушимежрайгаз» филиалĕн ертӳçине Р. Чебенова асăнмалла. Уяв чăннипех те район шайĕнче иртрĕ темелле. Ял-йыша та тавтапуç уява хаваспах хутшăннăшăн.

**Г. ГОЛУБЕВА,**
**Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: тулли кăмălпа савăнчĕç ачасем уявра.**

Диспансеризаци

# Сывлăх мулран та хаклăрах

Сывлăх – чи хаклă пурлăх. Çакна эпир пурте лайăх пĕлетпĕр пулин те, темшĕн-çке упрама тăрăшмастпăр. Алă кăна сулатпăр. Пурпĕрех вилмелле текелетпĕр тата, анчах та çамрăкла пурнăçран уйрăлнипе ватăлса вилнин уйрăмлăхĕ пурах вĕт? Ахальтен каламан вĕтха ватăсем кашни çыннăн хăйĕн ĕмĕрĕнче йывăç лартмалла, мăшăрланса ача-пăча çуратмалла, пӳрт лартмалла тесе. Енчен те сывлăх пулмасан çакă пĕтĕмпех ăçтан пулĕ-ха? Çавăнпа та çынсен сывлăхне пăхса тăрас тесе медицина ĕçченĕсем халăха диспансеризацие явăçтараççĕ. Çак диспансеризаци медосмотр евĕрех, анчах та анлăрах иртет.

Ĕçлекенсем кашни çулах медосмотр тăраççĕ. Хăшĕ-пĕри çак медосмотра тăнă чухне ĕçре ĕçлеттермесрен хăраса хăйĕн мĕн ыратнине каламасăр хăварать. Ыратсан килетĕп-ха, теççĕ. Ĕçе çӳременнисем тата тивĕçлĕ канăва тухнисем медосмотр мĕн иккенне те манса каяççĕ, сывлăхĕ тухтăрсене мар, хăйсене кирлине шутламаççĕ.

Кашни çыннăн сывлăхне пăхса тăрас тесе Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерстви кăçалхи февраль уйăхĕнче 147 номерлĕ хушу кăларнă. Çак хушу тăрăх кашни çыннăн виçĕ çулта пĕрре обязательнăй йĕркепе медосмотр (диспансеризаци) тăмалла. Çак ĕç пирĕн пурнăçра питĕ çирĕп йăла пулса тăмалла. Нумай чух урамра хирĕç пыраканран вăл флюорографи тĕрĕслевне хăçан иртернипе кăсăклансан, çын çухалсах каять, аса та илеймест. Çапла ан пултăр тесен вара пирĕн медосмотра çуралнă кун иртнĕ хыççăнах каймалла. Вара çын флюорографи хăçан тăнине те манса каймасть. Йĕркелленсе кайма пуриншĕн те çăмăл мар пулĕ, анчах та пурте тăрăшсан виçĕ çулта пĕрре диспансеризаци тăрассине те йăлана кĕртме пулать.

Кăçалхи çула илес пулсан çак çулсенче çуралнисем диспансеризаци тăраççĕ: 1911, 1914, 1917, 1920, 1923, 1926, 1929, 1932, 1935, 1938, 1941, 1944, 1947, 1950, 1953, 1956, 1959, 1962, 1965, 1968, 1971, 1974, 1977, 1980, 1983, 1986, 1989, 1992.

Тепĕр çула валли ытти çулсенче çуралнисене диспансеризаци тăратма планланă. Çапла майпа никам та диспансеризаци тăмасăр юлмалла мар. Мана ку диспансеризаци кирлĕ мар текен шухăш пуçра пулмалла мар. Диспансеризацисем хушшинче вара кашни çыннăн флюорографи тăмалла, хĕрарăмсен смотровой пӳлĕмре те пулмалла.

Диспансеризаци тума пуçланăранпа виçĕ хĕрарăмăнне пуçламăш тапхăрти кăкăр шыççине тупса палăртса вăхăтра сиплеме пултарчĕç. Çакă 40 çултан иртнĕ хĕрарăмсене маммографи тĕрĕслевĕ ирттернипе çыхăннă. Çавăнпа та хĕрарăмсен маммографирен хăрамалла мар. Арçынсен вара часах предстата железин ракĕ пулать. Ăна кăçал ултă арçынăнне çийĕнчех тупса палăртнă. Халĕ вĕсем пурте сипленеççĕ.

Диспансеризаци тăрас ыйтупа вырăнти фельдшерсем е участок терапевчĕсем патне пымалла. Вĕсем тĕпĕ-йĕрĕпех ăнлантарĕç.

**А. ПЕТРЯКОВА,**
**Тойкилтĕри ФАП акушерĕ.**

# ХАЛĂХ ТĔРĔСЛЕВĔ

**Проект Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.** Кăларăма Н. Николаева ертсе пырать.

## Вырăна тухса канашлани пуриншĕн те пĕлтерĕшлĕ

***Район администрацийĕн пуçлăхĕ çумĕнчи обществăлла канаш 2012 çултанпа ĕçлет. Вăл хăйĕн ĕçне районти гражданла обществăна аталанма лайăх социаллă лару-тăру тытса пырас, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене обществăлла организацисемпе, политика партийĕсемпе, районти ытти пĕрлешӳсемпе çыхăнса ĕçлеме пулăшас тĕллевпе йĕркелесе пырать. Обществăлла канаш район администрацийĕпе, депутатсен районти Пухăвĕпе килĕштерсе ĕçлет, депутатсен ларăвĕсене хутшăнать.***

***Канаш пирки тĕплĕнрех калаçма редакци тĕпелне район администрацийĕн пуçлăхĕн çумне, канашăн секретарьне Л. ТАРАСОВĂНА чĕнтĕмĕр.***



**– Лилия Юрьевна, çак обществăлла канаш хăйĕн умне мĕнле тĕллевсем, задачăсем лартнă?**

– Обществăлла канаш çынсемпе вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем хушшинчи çыхăнăва çирĕплетес тума тивĕç. Çынсем тенине вара вĕсен тĕрлĕ пĕрлешĕвĕсем тесе те ăнланмалла. Кунсăр пуçне асăннă канаш политика партийĕсен представителĕсемпе те, профсоюзсемпе те çыхăну тытать. Канаш членĕсем район ĕçĕ-хĕлĕшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйтусене татса парассине те хутшăнаççĕ: сăмахран, пĕрпĕр программа туса хатĕрлессине, ăна тишкерессине. Канаш вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемшĕн хăйне май обществăлла тĕрĕслев органĕ пулса тăрать.

Обществăлла канаш йышĕнче активлă, анлă тавра курăмлă, ĕçре пысăк опыт пухма ĕлкĕрнĕ çынсем. Вĕсем пурте районти социаллă активлăха, çынсен культура шайне ӳстерес тесе тĕрлĕ енлĕ ĕç пурнăçлаççĕ. Çынсен интересĕсене мала хурса çивĕч ыйтусене вĕсем майлă татса парассишĕн тăрăшаççĕ. Вĕсем çынсен шухăш-кăмăлне пĕлсе тăраççĕ, мĕншĕн тесен вырăнти, район шайĕнчи тĕрлĕ канашлу-пухусене, ытти мероприятисене тăтăшах хутшăнаççĕ. Çапла вара район администрацийĕн пуçлăхĕ çумĕнчи канаш членĕсем чăнах та пирĕн обществăра мĕнле лару-тăру иккенне хăйсен куçĕпе курса тăраççĕ, апла пулсан ертӳçĕсене те вырăнлă сĕнӳ-канаш пама пултараççĕ.

**– Çивĕч ыйтусем татса панă чух канаш членĕсем тĕрлĕ официаллă ĕç хучĕсемпе паллашма пултараççĕ-и? Çынсен интересĕсене хӳтĕлес тесен тепĕр чух пĕр ыйтăва татса пама та тĕрлĕ хут «çĕклемелле» пулса тухать.**

– Обществăлла канаш членĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем экономикăпа социаллă е обществăлла политика пурнăçĕ тĕлĕшпе хатĕрленĕ документсемпе паллашма ирĕк пур. Кунсăр пуçне вĕсем кирлĕ информацие официаллă майпа ыйтса илме те пултараççĕ. Полномочийĕсене кура обществăлла канаш членĕсем вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен хăйсем йышăннă решенисене мĕнле пурнăçланине те контрольлесе тăма пултараççĕ. Вĕсенчен кашниех районта пурăнакансен интересĕсене пырса тивекен ыйтусемпе массăллă информаци хатĕрĕсенче калаçма, пичетленме пултарать.

**– Обществăлла канашăн ларăвĕсем усă майпах иртеççĕ-и?**

– Ларусем план тăрăх кварталта пĕр хутран кая мар пулаççĕ. Ĕçе кура черетсĕр ларусене те пухăнма пултараççĕ. Усçăнлăх пирки калас пулсан ларусене массăллă информаци хатĕрĕсен представителĕсене те йыхравлаççĕ. Çапла майпа информаци пичете те, сайтсене те çитет. Унпа кашниех паллашма пултарать.

Иртнĕ черетлĕ ларăва акă вырăна тухса ирттертĕмĕр. Кун йĕркинчи ыйтусем ял хуçалăх предприятийĕсенче кĕрхи ĕçсем, шкулсен çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленесси пирки пулчĕ. Обществăлла канаш председателĕ – район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев ертсе пынипе Е. Андреев, Чапаев ячĕпе хисепленекен хуçалăхсенче пултăмăр. Ĕç коллективĕсемпе тĕл пулса тĕрлĕ шухăша сӳтсе яврăмăр.

Çак лару вăхăтĕнче канаш членĕсем Чапаев ячĕпе хисепленекен хуçалăха малтан ертсе пынă Артур Федоров ячĕпе уçнă мемориал хăмине йĕркене кĕртме сĕнчĕç. Хăй вăхăтĕнче усçăнлăхшăн пĕлтерĕшлĕ пысăк ĕçсем пурнăçланă ертӳçĕне сума сумалах пирĕн.

Чуманкассинчи вăтам шкул вĕренӳ çулне мĕнле хатĕрленнипе паллашрăмăр. Шкул ачасене кĕтсе илме хатĕр пулни, унти тирпейлĕх тӳрех куранчĕ, кăмăла хăпартрĕ. Юлашки çулсенче кунта юсав ĕçĕсем чылай пурнăçланă. Кăçал столовăй çĕнетнĕ, вĕренӳ класĕсем те питĕ хăтлă, кашни класра Интернетпа çыхăну пур. Шкул директорĕ В. Васильев каланă тăрăх кăçал шкул çĕнĕ котельнăй туса çурта уйрăммăн хутса ăшăтас йĕрке çине куçасшăн. Патшалăх бюджетран уйăрса панă укçа-тенкĕпе шкулта тĕллевлĕ усă курни, çакă пĕтĕмпех ачасене вĕренме тата аталанма лайăх условисем тунипе çыхăнни обществăлла канаш йышне кăмăллă хăварчĕ.

Канаш ларăвĕсене малашне те вырăнсене тухса ирттерме шутлатпăр. Çапла майпа халăхпа влаç хушшинчи ăнлану çулне кĕскетме май пурри, «аксакалсен» сĕнĕвĕсем те вырăна тухса каласан витĕмлĕрех пулни куç кĕрет.

**Сăн ӳкерчĕкре: обществăлла канаш Чуманкассинчи вăтам шкулти «çавра сĕтел» хушшинче.**

## Ырă сăмах вăй-хăват хушать

**Москакасси ял тăрăхĕнчи хĕрарăмсен канашĕ – районта чи лайăххисенчен пĕри. 2001 çултанпа ăна хальхи вăхăтра Москакассинчи информаципе культура центрĕн директорĕнче тăрăшакан Г. Голубева ертсе пырать. Кĕске калаçу вăхăтĕнчех Галина Георгиевна хăйсен ĕçĕ-хĕлĕ пирки чылай интересли каласа пачĕ.**

– Хĕрарăмсен канашне ертсе пырасси обществăлла ĕç пулин те эпĕ ăна та тулли кăмăлпах пурнăçлама тăрăшатăп. Пирĕн канашра çичĕ маттур та активлă хĕрарăм. Вĕсем тĕрлĕ организаци-учрежденисенче вăй хураççĕ, анчах та ман пекех вырăнти халăхăн пурнăçне интереслĕрех, çынсене ырă тăвасшăн çунаççĕ.

Çынсене пĕрле пухсан вĕсен кăмăл-туйăмне ытларах пĕлме пулать, çавăнпа та мероприятисем ытларах ирттерме тăрăшатпăр. Пирĕн ял тăрăхĕнче çулталăк тăршшĕпех интереслĕ мероприятисем пулаççĕ: Аmăшкунĕ, Çемье кунĕ, Ачасене хӳтĕлемелли кун, Ватă çынсен кунĕ, спорт ăмăртăвĕсем...Çавăнпа та никама та тимлĕхсĕр хăвармастпăр темелле. Ватă çынсене юбилейсемпе саламлатпăр, ылтăн туй тăвакансем патне çитсе уяв концерчĕ парнелеме тăрăшатпăр, тин çеç çуралнă ачасене, вĕсен ашшĕ-амăшне шута хурса пĕчĕк пепкесен паркĕнче 2005 çултанпа йывăç лартрăмăр. Халĕ ку парк тулчĕ, çĕнĕ вырăн пирки шухăшламалла.

Мероприятисене нумай ачаллă йывăртарах лару-тăруллă çемьесене хутшăнтарма тăрăшатпăр. Çемьере ашшĕ-амăшĕн юратăвĕ, тимлĕхĕ, ăшши сахалтарах ачасем тĕрлĕ ăмăртусене, конкурссене питĕ хутшăнасшăн. Унта вĕсем парнесем çĕнсе илеççĕ, вĕсене ыттисемпе танах тимлĕх уйăратпăр. Çакăнпа ачасем кăмăллă.

Ырă ĕç тума, паллах, пуçарулăх кăна çителĕксĕр, пулăшакансем те кирлĕ. Акă Ачасене хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери кун ячĕпе уяв иртерме çулсеренех Инга Терентьева предприниматель нумай пулăшать. Кашни ачана парне пама сахал укçатенкĕ кирлĕ-и? Ачасем вара чунтан савăнаççĕ, тен шăпах çакăн пек пĕчĕк савăнăçсем вĕсене кăшт йăвашрах, çынна ăнланма пĕлсе ӳсме пулăшаççĕ.

Пирĕн ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Алексей Матросов та питĕ хастар çын, питĕ тăрăшать вăл. Вырăнти пуçлăх мĕнле пулни те пĕлтерĕшлĕ çав. Тĕрлĕ ăмăртусем, мероприятисем ирттерме ял тăрăхĕн бюджетĕнче укçатенкĕ пăхса хураççĕ. Çавăнпа та кашни мероприятиех эпир тĕплĕ хатĕрленсе иртеретпĕр, ячĕшĕн тумастпăр. Ячĕшĕн ирттерсен уявăн ячĕ кăна асра юлать



пулĕ, тен, юлмасть те...

Москакасси ял тăрăхĕнчи ачасемпе çамрăксем спортпа туслă, çавăнпа та вĕсем валли ăмăртусем йĕркелеме те тăрăшатпăр. Ача чухнех спортпа туслисем ӳссен те обществăшăн лайăх ĕçсем тăваççĕ пулĕ, сӳрĕк çынсем пулмаççĕ тесе шутлатпăр.

Çынсене пĕрле пухса ĕçлессин пĕлтерĕшне пĕр сăмахпа каласа ăнлантарма çук – пĕлтерĕшĕ анлă, анчах та кашни мероприяти хысçăн, пĕрле пухăнса пурнăçланă ĕç хыççăн тав сăмахĕ илтни çакна тата та тарăнрах ăнланса илме май парать. Халăхăн ырă сăмахĕ чĕре патне çитсен вара вăй-хăват татах хушăнать.

**Сăн ӳкерчĕкре: августăн 24-мĕшĕнче Москакасси ял тăрăхĕнче Çамрăксен кунĕнчи спорт ăмăртăвĕсене хутшăнакан та, куракан та йышлă пулчĕ.**

## Чĕррисен тивĕçĕ – асра тытасси

1991 çултанпа октябрĕн 30-мĕшĕнче политика репрессийĕсенче шар курнисем, хыççăн таса ят тавăрнисем палăксем патĕнче митингсене пухăнаççĕ. Пуç тайса совет тапхăрĕнчи хăрушă çулсене аса илеççĕ, ăшра вара урăх никамăн та ун пеккине курмалла ан пултăрччĕ тесе калаççĕ...



Политика репрессийĕсенче шар курнисен – Чăваш Енри инвалидсен ыр кăмăллăх обществăлла организацийĕ 2007 çултанпа ĕçлет. Вăл 830 çынна яхăн пĕрлештерсе тăрать, вĕсенчен ытларахăшĕ – политика репрессийĕсенче шар курнă, хыççăн таса ята тавăрнă инвалидсем. Пирĕн районта çак организацин вырăнти уйрăмне йĕркеленĕ. Паянхи кун унăн йышĕнче 43 çын.

Патшалăх пире тимлĕх уйăрмасть темелле мар. Акă «Чăваш Республикин политика репрессийĕсенче шар курнисен астăвăм кĕнекине» те пичетлесе кăларнă. Вăл икĕ томран тăрать. Унта 12,5 пин çын даннăйĕсем пур. Вĕсене пирĕн республика территорийĕнче репрессиленĕ. Çак кĕнекене ял тăрăхĕсенчи библиотекăсене валеçсе пани те питĕ тĕрĕс.

Улатăрта ятарлă палăк пур, 2010 çулта акă Етĕрнере те, Сăр хĕрринче, политика репрессийĕсенче шар курнисене асăнса палăк уçрĕç. Палăка лартма хула тата район çыннисем, организацисем укçа-тенкĕ пухнă. Пирĕн район делегацийĕ çак палăк патĕнче пулса курчĕ **(сăн ӳкерчĕкре)**.

Пирĕн районта кун пек палăк çук. Ăна туса лартас шухăш вара пирĕн тахçанах çуралнă. Çакăн пирки эпир пĕлтĕр район администрацийĕн пуçлăхĕ çумĕнчи обществăлла канаша та тухнăччĕ. Пирĕн шухăша ырларĕç, паллах, ĕçе ниме майĕпе тума тивнине каларĕç.

Пирĕн организаци – обществăлла организаци, коммерци ĕç-хĕлне туса пымастпăр, çавăнпа та спонсорсен е грант мелĕпе килекен пулăшу пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать.

Муркаш районĕнчи 700-е яхăн çын политика репрессийĕсенче шар курнă. Вĕсем пурте камăн та пулин йăх-несĕлĕнчен. Çавăнпа та Муркашра палăк пулни никама та усал тумĕ.

**Н. КЛЕМЕНТЬЕВ, политика репрессийĕсенче шар курнисен обществăлла организацийĕн вырăнти уйрăмăн председателĕ.**

# Кил тата хушма хуçалăх



## Вăл яланхиллех маттур

Сăн ӳкерчĕкре Муркашра пурăнакан Нина Воробьевăна куратăр. Халĕ вăл тивĕçлĕ канура ĕнтĕ. Ĕмĕрĕпех вăй-хала шеллемесĕр ял хуçалăх ĕçĕнче тимленĕскер хушма хуçалăхра вăй хурать, София мăнукĕпе йăпанать.

Нина Сергеевна хăй кун-çул çăмхине манпа пĕрле сӳтме пачах та хирĕç пулмарĕ, хаваспах иртнине аса илчĕ килтĕрешре аппаланнă майăн.

... Шкула каяссине чăтăмсăррăн кĕтнĕ хĕр ача вĕренӳре аван ĕлкĕрсе пынă. Ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулнă. Чылайăшĕ урок хыççăн та унпа çывăхарах калаçма тăрăшнă, пĕлмен темăна наччасрах ăнлантарса панă вăл. Хăй вăр-вар пулнипе хăшне-пĕрне тепĕр чухне тĕрткелесе те илнĕ. Çапларах маттур хĕр ача пулнă Нина. Шкул çулĕ вĕçнелле пынă май выльăх тухтăрĕ пулас шухăш-тĕллев унра ытларах тĕвĕленнĕ. Пурнăç çулĕ çине тăма ĕмĕтленекен ача суйлавĕпе аслисем те кăмăллă пулнă. Акă Нина кушак çурисене сиплет, часах путек-сурăхпа калаçса илет, çăмха евĕр сар чĕпсем те ун хыççăнах чупаççĕ. Çапла вара вĕсем пĕр-пĕрне çур сăмахранах ăнланаççĕ тейĕн.

– Врач вăл – ялти хисеплĕ çын. Аслă пĕлӳ илсен эсĕ кирек ăçта та ĕç тупăн, вĕренех, хĕрĕм, – тенĕ унăн шухăшне ырласа çывăх çыннисем.

Çапла вара Шупашкар районĕнчи Ердово ялĕнче çуралса ӳснĕ хĕр шкултан вĕренсе тухсан Хусана çул тытать.

– Çапах та шиклĕх туйăмĕ те пурччĕ, тăван килйышран ытла та аякра вĕт. Патшалăх ветеринари институтне çитсе вырнаçрăм, – аса илет Нина Сергеевна иртнĕ вăхăта.

Кунта та вăл – вĕренӳре малтисенчен пĕри ĕнтĕ, çавăн пекех общественлă ĕçе те хутшăнма вăхăт тупать. Пĕр çулхине практика сехечĕсене Муркаш районĕнче ирттерет вăл. Кунта врач асăннă професси пахалăхне тата вăл еплерех кирлĕ пулнине ытларах та туйса илет. Çапла вара мĕн пур йывăрлăха çĕнтерсе алла диплом илсе тăван тăрăха таврăнать. Халĕ Нина Сергеевна – аслă пĕлӳллĕ врач.

Çамрăк специалиста Красноармейски районне ĕçлеме йыхравлаççĕ. Çак тăпхăрта пирĕн районта та ветеринари врачĕ кирлĕ пулнă. Çапла вара практикăра хăйне ăсталăхпа палăрнăскерне Муркаш районне чĕнсе илеççĕ. Ответлăха туякан çын хăй ĕçĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине шута илсе вăрăм çула тухать. 1968 çултанпа Нина Сергеевна Муркаш тăрăхĕнче вăй хурать, ветеринари лабораторийĕн директорĕнче те тимлет. Тивĕçлĕ канăва тухнă хыççăн асăннă отрасльте пилĕк çул вăй хурать. Чунпа парăннă ĕçрен уйрăлнăранпа вара вунă çул ĕнтĕ. Вăрăм ĕç тапхăрĕнче миçе çамрăк специалиста пурнăç çулĕ çине тухма пулăшман пулĕ. Халĕ вĕсем хисеплĕ çыннăмăра тав сăмахĕ калаççĕ, паллă кунсем ячĕпе саламлама та манмаççĕ.

Хушма хуçалăх тытакансемшĕн вăл яланах тĕп пулăшуçă пулнă, пĕри выльăх-чĕрлĕхне сиплеме чĕнет, тепри тĕрĕслев ирттерме ыйтать – çак ĕçсене пурнăçласа çул хыççăн çул сисĕнмесĕр чупать. 1995 çулта ăна Чăваш Республикин Тава тивĕçлĕ ветеринари врачĕ ят параççĕ. Çавăн пекех ĕçри тăрăшулăхне, пултарулăхне чылай-чылай Хисеп грамоти тата ытти паллă çирĕплетет.

Тĕрлĕ ĕçе пула ывăнса таврăннă амăшĕ Эдикпа Дима ачисене тĕрĕс воспитани парассине яланах чи малти вырăна хунă. Вĕсене иккĕшне те аслă пĕлӳ илме май туса панă. Пĕрремĕшĕ врач пулса ĕçлет, иккĕмĕшĕ вара инженерта вăй хурать.

Çавăн пекех хушма хуçалăхра ӳстернĕ çимĕçпе тата ыттипе пасара тухма та вăхăт тупнă. Халĕ те çак ĕçпех тимлет хисеплĕ Нина Сергеевна. Кролик, чăх-чĕп йышлă усрать, сад-пахчара тăрăшать. Кĕçех çитмĕл теçетке пулать пулин те вăл вăр-вар, шӳт сăмахне те наччасрах тупать. Çапах та сумлă çула çитнĕ çыншăн чи пĕлтерĕшли – ăна çывăх çыннисем хисеп туни пулĕ. Ывăлĕ-кинĕсем уншăн пурте пĕр тан, пĕр çемьери ачасем тейĕн, уйăрас йăла çук унăн. Ав çулталăкран иртнĕ София та ун еннеллех туртăнать. Çапларах маттур çын вăл Нина Сергеевна.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Кун-çул



Ан ӳркенĕр

## Аджика

3 килограмм тăрăхла кавăн, 500 грамм кишĕр, 500 грамм пылак пăрăç, 1,5 килограмм помидор, 2,5 апат кашăкĕ вĕтетнĕ хĕрлĕ пăрăç, 2 – 3 пуç ыхра,100 грамм сахăр песукĕ, 2 апат кашăкĕ тăвар, 200 грамм тип çу кирлĕ.

Помидора, пылак пăрăça, тăрăхла кавăна вăрринчен, хуппинчен тасатнă хыççăн аш арманĕпе авăртмалла. Çаксене пĕр савăта ямалла, сахăр, тип çу, тăвар хушса лайăх пăтратмалла, пĕçерме лартмалла. Вĕреме кĕнĕ хыççăн 40 минут пĕчĕк çулăм çинче тытмалла. Хĕрлĕ пăрăç, вĕтетнĕ ыхра ярса тепĕр 10 минут вĕретмелле. Таса савăтсене тултарса хупмалла та вĕсене кутăн çавăрса лартмалла. Ăшă япалапа витмелле.

## Пылак çĕр улми тутанмăр-и?

Тăвар хушнă шывра 12 –15 минут 600 грамм чухлĕ вĕтĕ çĕр улми пĕçермелле. Пысăк савăта 60 грамм сахăр песукĕ ямалла, 3 литр шыв хушмалла. Пĕчĕк çулăм çинче çăра сироп пуличчен пĕçермелле, çĕр улмине унта ямалла. Кăштах лартнă хыççăн пылак çимĕçе çатма çинче сараличчен ăшаламалла.

## Асанне квасĕ

Асанне пире малтан тăтăшах çăкăр квасĕ туса ĕçтеретчĕ. Эпĕ ăна халĕ те тăватăп, пурте кăмăллаççĕ. Сире хамăн рецептпа паллаштарасшăн.

2,5 литр квас валли 200 грамм хура çăкăр, 2,5 литр шыв, 3 кашăк сахăр, 0,5 чей кашăкĕ чухлĕ типĕ çĕпре, пĕр ывăç иçĕм çырли кирлĕ.

Çăкăра турамалла та типĕ çатмана хурса 180 градус таран хĕртнĕ духовкăна лартмалла. Хуралма пуçласан кăлармалла, банкăна ямалла. Унта вĕретнĕ шыв хушмалла та хупласа çĕр каçармалла.

Çур стакан ăшă шыва чĕптĕм сахăрпа çĕпре ямалла. Йӳçме лартмалла. Çăкăр ислентернĕ шĕвеке сăрăхтармалла. Сахăр, иçĕм çырли тата çĕпре хушса пăтратмалла. Хупса пĕр каçлăха ăшă вырăна лартмалла. Квас хатĕр те.

**Н. ИВАНОВА.**

Мăн Сĕнтĕр сали.

Кайăк-кĕшĕк

## Хурсем сире савăнтарччăр

**Усравлăх хăварма лайăх хур амине мĕне кура суйлаççĕ?**

Хушма хуçалăхра йышлă хур чĕппи илме çăмăл мар. Тупăшлăх аçапа ама пахалăхĕнчен килет. Харăсах 2 – 4 амапа пурăнма пултаракан хур аçине тӳрех пĕлме пулать. Унăн çунатти çинче пĕчĕк икĕ тĕк (хачă евĕр) пур. Пĕр амана çеç кăмăллаканнин вăл çук. Аратлă аман хӳри çинче тĕк мăшăрлă çитĕнет, вăл 16,18, 20 пулма пултарать.

**Хăш-пĕр ама çăмарта йышлă тăвать, анчах та чĕпĕ тухаслăхĕ начар, çакă мĕнрен килет-ши?**

Пур хур аçи те пĕр пек мар. Вĕсем ама патне мĕнле пыни, кайăк-кĕшĕк пурнăç условийĕнчен чылай килет. 2 градус сивĕ тата 25 градус ăшă çĕрте хур аçин вăйĕ чакать, çавăнпа та çăмарта пĕтĕленеймесĕрех юлать. 1 – 23 градус ăшă вĕсемшĕн чух. Кайăк-кĕшĕк витинчи тасалăх пирки те манмалла мар. Хĕлле урисем шăнасран типĕ айсарăм кирлĕ.

**Çулталăкран иртнĕ кашни хура пусса пĕтермелле мар, унта кĕтӳ ертӳçи пур.**

Хур – кĕтӳпе çӳрекен кайăк. 1,5 – 2 уйăх тултарсанах вĕсем хушшинче пуçлăх тупăнать. Вăлах ушкăнра йĕрке тăвать, ыттисене ертсе çӳрет. Хур – чылай çул пурăнакан кайăк, çавăнпа та кĕтӳ ертӳçине 6 – 8 çуллăха хăвармалла. Лайăх хур аçи çемьене сыхлать. Пурте курăк чĕпĕтнĕ чухне вăл пăхса тăрать. Кирек ăçта кайнă чухне те вăл пуринчен малта утма тăрăшать.

## Йывăç-тĕм сиплер

Паянхи ĕçсем

Сăтăрçăсенчен пачах та сиплемен сад-пахча çуллен-çул хавшаса пырать. Çапла вара ку таранччен пахалăхлă продукципе савăнтарнă улма-çырла йывăççисем те кăмăла хуçаççĕ. Пулса çитме ĕлкĕреймен çимĕç сăтăрçă е тĕрлĕ чир-чĕр сиенленипе вăхăтсăрах татăлса ӳкет. Çанталăк нӳрĕ тăнипе е йĕпе тата чăтлăх вырăнта вара хăшĕ-пĕри ытларах та ĕрчет. Çавăнпа та улма-çырла йывăççисене упраса хăварас ĕçе пĕр тăхтаса тăмасăр пурнăçлама тытăнмалла. Чи пĕрремĕш ĕç вăл – çĕре ӳкнĕ çимĕçе пуçтарса илесси, унсăрăн чир-чĕр ытларах сарăлнипе йывăç татах та хавшать. Çакăн хыççăн йывăç-тĕме сыватма пуçламалла.

Медведкăпа кĕрешес пулсан йывăç айне улăмлă тислĕк тултарнă витре 50 сантиметр тарăнăшне чавса лартмалла. Сивĕ пуçланас умĕн вĕсем çакăнта пухăнаççĕ, çапла вара вĕсене çăмăллăнах пуçтарма пулать. Çавăн пекех ку сăтăрçă хризантема чечекĕнчен хăрать, апла пулсан ăна йывăç-тĕм айнерех хуçса хумалла.

Пилеш тăрăллă курăка, армутине улмуççи çумне çыхни плодожорка сăтăрçине хăратать. Çавăн пекех унпа кĕрешме тепĕр меслет пур. Ăна валли 4 килограмм чухлĕ помидор туратти илмелле те 10 литр шыв çине ярса 30 минут хушши пĕчĕк çулăм çинче вĕретмелле. 2 – 3 литр хатĕр шĕвеке 10 литр шывпа хутăштармалла, 40 г супăнь ямалла. Çак хутăшпа йывăçа сирпĕтмелле.

Парша чирĕ нӳрĕк çул уйрăмах анлă сарăлать. Çакă çимĕç тата унăн çулçи çинче аван курăнать. Хура лаптăкпа сиенленнĕ пан улми тата груша формипе илемсĕр пулать. Чирлĕ çимĕç япăх упранать. Унпа кĕрешме çимĕç пуçтарса илнĕ хыççăн, çулçăсем ӳксе пĕтиччен 5 процентлă мочевина хутăшĕпе (10 литр çине 500 грамм) сирпĕтмелле. Ку сăтăрçă уйрăмах йывăç тăрринче йышлă ĕрчет.

Монилиоз чирĕ çӳлерех асăннинчен те сиенлĕрех. Чи малтанах çимĕç çинче çĕрнĕ пĕчĕк лаптăк палăрать, каярах вара талккишпех сарăлать. Йывăç айне ӳкнисенче чир-чĕр хĕл каçипех упранать. Çуркунне пуçлансан вара маларла аталанать. Çавăнпа та çимĕçе йăлтах пуçтарса илмелле, йывăç çинчисене те хăвармалла мар. Çак чирпе кĕрешме 1 процентлă бордос шĕвекĕпе е 0,4 процентлă пăхăр хлорокиçĕпе усă курмалла.

Улма-çырла йывăççисен сăтăрçисене татах та асăнма пулать. Вĕсемпе пĕтĕмĕшле кĕрешес пулсан вара çулталăкра виçĕ хутчен сиплев курсĕ туса ирттермелле. Пĕрремĕш тапхăр – папаксем çурăлас умĕн. Ăна валли 3 процентлă нитрофен е 3 – 4 процентлă 30 № препарат кирлĕ. Чечеке лариччен тата çимĕç пухнă хыççăн 0,6 процентлă бензофосфат е 0,75 процентлă карбофос, 5 процентлă антитлин препаратсемпе усă курмалла. Çак ĕçе пĕр хутчен кăна пурнăçлани вара питĕ çителĕксĕр.

**Р. АЛЕКСАНДРОВА.**

Уйăх календарĕ

## Сад-пахчари ĕçсем

***Кĕркунне хăй пирки ытларах та ытларах систерме пуçларĕ. Ир-каç самай сулхăн. Халĕ пахча-çимĕç пухмалли хĕрӳ тапхăр пырать. Çавăн пекех çĕр янтăласси, ӳсен-тăрана хĕле хатĕрлеме пуçласси çинчен те манмалла мар.***

***Кашни хушма хуçалăхрах çĕр улми кăларассипе тимлеççĕ. Пахалăхлă тата пысăк тухăç илес пулсан вăрлăха халех хатĕрлемелле.***

**Сентябрĕн 1 – 2-мĕшĕсем** – çĕр хатĕрлемелле, çĕрнĕ тислĕке салатмалла, тымар çимĕç пухма пуçламалла. Сырлан, хура тата хĕрлĕ пилеш те пулса çитнĕ ĕнтĕ, кая юлса пулакан пан улми те пиçнĕ. Суханран пулакан тĕрлĕ чечек лартма вăхăт.

**Сентябрĕн 2 – 4-мĕшĕсем** – кирек епле ӳсен тăрана та лартма мелсĕр тапхăр. Тĕслĕ тата йĕплĕ хурлăхан туратисене касмалла. Çуркунне йывăç-тĕм лартма шăтăк хатĕрлемелле. Сад-пахчари тасамарлăха çунтармалла.

**Сентябрĕн 4 – 6-мĕшĕсем** – нимĕн те куçарса лартма мелсĕр вăхăт. Эмел курăкĕсен тунипе тымарне типĕтмелле. Теплицăри çимĕç тунисене кăлармалла, йăран валли çĕр касса хатĕрлемелле.

**Сентябрĕн 6 – 9-мĕшĕсем** – йывăç-тĕме апатлантарма мелсĕр вăхăт. Нумай çул ӳсекен культурăсене пайласа куçарса лартмалла. Ватăлнă тата япăхнă хăмла çырли тураттисене иртмелле.

**Сентябрĕн 9 – 11-мĕшĕсем** – кĕрхи ыхра тата ун вăррисене лартма пуçлама юрать, тюльпан лартма та вăхăтлă.

**Сентябрĕн 11 – 13-мĕшĕсем** – хăмла çырли тураттисене çĕр çумне тайăлтармалла. Йывăç-тĕме тĕрлĕ сăтăрçăран сиплемелле, сиенленнĕ турата, çимĕçе пухса илмелле. Çак кунсенче карчăк ăшши пуçланать тенĕ халăхра.

**Сентябрĕн 13 – 15-мĕшĕсем** – кĕрхи ыхра лартмалла, çавăн пекех салат, петрушка, укроп, шпинат лартма пуçламалла. Купăстана та тутă кĕнĕ ĕнтĕ. Йывăç-тĕм таврашĕнчи çĕре кăпкалатмалла.

**(Вĕçĕ çитес кăларăмра).**

# Телепрограмма

## со 2 по 8 сентября 2013 года

### ПОНЕДЕЛЬНИК, 02.09

**ПЕРВЫЙ**

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
13.45 «Истина где-то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 12+
15.15 Т/с «ЖЕНСКИЙ ДОКТОР» 16+
16.10 Т/с «ЯСМИН» 16+
17.00 «В наше время»
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ЖЕНИХ» 12+
23.30 «Вечерний Ургант» 16+
0.10 «Городские пижоны» «Билл Гейтс. История успеха» 12+
1.05 Х/ф «СУМАСШЕДШИЕ НА ВОЛЕ» 12+
3.05 Т/с «ФОРС-МАЖОРЫ» 16+

**РТР**

5.00 Утро России
9.00 «1000 мелочей»
9.45 «О самом главном»
10.30 «Кулагин и партнеры» 12+
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.50, 14.50 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «ТАЙНЫ ИНСТИТУТА БЛАГОРОДНЫХ ДЕВИЦ»
16.00, 17.30 Т/с «ВСЕГДА ГОВОРИ «ВСЕГДА»-7» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ПРОСТАЯ ЖИЗНЬ» 12+
0.30 «Дежурный по стране» Михаил Жванецкий
1.25 «Девчата» 16+
2.10 Х/ф «УЛИЦЫ В КРОВИ» 16+
4.00 Комната смеха

**ЧУВАШИЯ**

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
11.30-11.50 Вести-Чăваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чăваш ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия
**На канале «Россия 2»**
7.20-7.50 Страна спортивная. Чувашия

**НТВ**

6.00 «НТВ утром»
8.35, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.55 «До суда» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.35 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.30 Т/с «БОМБИЛА. ПРОДОЛЖЕНИЕ» 16+
21.25 Т/с «КОВБОИ» 16+
23.15 «Сегодня. Итоги»
23.35 Т/с «КАРПОВ» 16+
1.30 «Лучший город Земли» 12+
2.30 Дикий мир 0+
3.00 Т/с «ВИСЯКИ» 16+
5.00 Т/с «ЧАС ВОЛКОВА» 16+

### ВТОРНИК, 03.09

**ПЕРВЫЙ**

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15, 4.20 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
13.45 «Истина где-то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 12+
15.15 Т/с «ЖЕНСКИЙ ДОКТОР» 16+
16.10 Т/с «ЯСМИН» 16+
17.00 «В наше время» 12+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ЖЕНИХ» 12+
23.30 «Вечерний Ургант» 16+
0.10 «Городские пижоны» «Pink Floyd» «История «Wish you were here» 16+
1.20, 3.05 Х/ф «27 СВАДЕБ» 16+
3.30 Т/с «ФОРС-МАЖОРЫ» 16+

**РТР**

5.00 Утро России
9.00 «1000 мелочей»
9.45 «О самом главном»
10.30 «Кулагин и партнеры» 12+
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.50, 14.50 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «ТАЙНЫ ИНСТИТУТА БЛАГОРОДНЫХ ДЕВИЦ»
16.00, 17.30 Т/с «ВСЕГДА ГОВОРИ «ВСЕГДА»-7» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ПРОСТАЯ ЖИЗНЬ» 12+
0.45 Т/ф «ПРОТИВОСТОЯНИЕ» 16+
3.20 Т/с «ДЕВУШКА-СПЛЕТНИЦА-5» 16+

**ЧУВАШИЯ**

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.00 Утренний гость (на чувашском языке)
9.30-9.45 Активная молодежь
11.30-11.50 Вести-Чăваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чăваш ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия

**НТВ**

6.00 «НТВ утром»
8.35, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.55 «До суда» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.35 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.30 Т/с «БОМБИЛА. ПРОДОЛЖЕНИЕ» 16+
21.25 Т/с «КОВБОИ» 16+
23.15 «Сегодня. Итоги»
23.35 Т/с «КАРПОВ» 16+
1.30 Главная дорога 16+
2.05 «Чудо техники» 12+
2.35 Дикий мир 0+
3.05 Т/с «ВИСЯКИ» 16+
5.00 Т/с «ЧАС ВОЛКОВА» 16+

### СРЕДА, 04.09

**ПЕРВЫЙ**

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15, 4.20 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
13.45 «Истина где-то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 12+
15.15 Т/с «ЖЕНСКИЙ ДОКТОР» 16+
16.10 Т/с «ЯСМИН» 16+
17.00 «В наше время» 12+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ЖЕНИХ» 12+
23.30 «Вечерний Ургант» 16+
0.10 «Городские пижоны» «Как Стив Джобс изменил мир» 12+
1.05, 3.05 Х/ф «ВОЛК» 16+
3.30 Т/с «ФОРС-МАЖОРЫ» 16+

**РТР**

5.00 Утро России
9.00 «1000 мелочей»
9.45 «О самом главном»
10.30 «Кулагин и партнеры» 12+
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.50, 14.50 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «ТАЙНЫ ИНСТИТУТА БЛАГОРОДНЫХ ДЕВИЦ»
16.00, 17.30 Т/с «ВСЕГДА ГОВОРИ «ВСЕГДА»-7» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ПРОСТАЯ ЖИЗНЬ» 12+
0.45 Т/ф «ПРОТИВОСТОЯНИЕ» 16+
3.25 Т/с «ДЕВУШКА-СПЛЕТНИЦА-5» 16+

**ЧУВАШИЯ**

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
11.30-11.50 Вести-Чăваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чăваш ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия

**НТВ**

6.00 «НТВ утром»
8.35, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.55 «До суда» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.35 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.30 Т/с «БОМБИЛА. ПРОДОЛЖЕНИЕ» 16+
21.25 Т/с «КОВБОИ» 16+
23.15 «Сегодня. Итоги»
23.35 Т/с «КАРПОВ» 16+
1.30 Квартирный вопрос 0+
2.35 Дикий мир 0+
3.05 Т/с «ВИСЯКИ» 16+
5.00 Т/с «ЧАС ВОЛКОВА» 16+

### ЧЕТВЕРГ, 05.09

**ПЕРВЫЙ**

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15, 4.20 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
13.45 «Истина где-то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 12+
15.15 Т/с «ЖЕНСКИЙ ДОКТОР» 16+
16.10 Т/с «ЯСМИН» 16+
17.00 «В наше время» 12+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ЖЕНИХ» 12+
23.30 «Вечерний Ургант» 16+
0.10 «Городские пижоны» «Все или ничего: Неизвестная история Агента 007» 16+
2.00, 3.05 Х/ф «КОКОН: ВОЗВРАЩЕНИЕ»

**РТР**

5.00 Утро России
9.00 «1000 мелочей»
9.45 «О самом главном»
10.30 «Кулагин и партнеры» 12+
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.50, 14.50 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «ТАЙНЫ ИНСТИТУТА БЛАГОРОДНЫХ ДЕВИЦ»
16.00, 17.30 Т/с «ВСЕГДА ГОВОРИ «ВСЕГДА»-7» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ПРОСТАЯ ЖИЗНЬ» 12+
0.45 Т/ф «ПРОТИВОСТОЯНИЕ» 16+
3.35 Т/с «ДЕВУШКА-СПЛЕТНИЦА-5» 16+

**ЧУВАШИЯ**

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.00 Доступная среда (на чувашском языке)
9.15-9.45 Мир искусства. К 100 летию со дня рождения Ф. Лукина (на чувашском языке)
11.30-11.50 Вести-Чăваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чăваш ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия

**НТВ**

6.00 «НТВ утром»
8.30 Спасатели 16+
9.00 «Медицинские тайны» 16+
9.35, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.55 «До суда» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.35 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.30 Т/с «БОМБИЛА. ПРОДОЛЖЕНИЕ» 16+
21.25 Т/с «КОВБОИ» 16+
23.15 «Сегодня. Итоги»
23.35 Т/с «КАРПОВ» 16+
1.30 «Дачный ответ» 0+
2.35 Дикий мир 0+
3.05 Т/с «ВИСЯКИ» 16+
5.00 Т/с «ЧАС ВОЛКОВА» 16+

### ПЯТНИЦА, 06.09

**ПЕРВЫЙ**

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
13.45 «Истина где-то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 12+
15.15 Т/с «ЖЕНСКИЙ ДОКТОР» 16+
16.10 «За и против» Токшоу 16+
17.00 «Жди меня»
18.45 «Человек и закон» 16+
19.50 «Поле чудес»
21.00 «Время»
21.30 «Голос» 12+
23.40 «Вечерний Ургант» 16+
0.35 Х/ф «ПОД КУПОЛОМ» 16+
1.25 Х/ф «РОМОВЫЙ ДНЕВНИК» 16+
3.35 Т/с «ФОРС-МАЖОРЫ» 16+

**РТР**

5.00 Утро России
8.55 Мусульмане
9.05 «1000 мелочей»
9.45 «О самом главном»
10.30 «Кулагин и партнеры» 12+
11.00, 14.00, 17.00, 20.25 Вести
11.50, 14.50 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «ТАЙНЫ ИНСТИТУТА БЛАГОРОДНЫХ ДЕВИЦ»
16.00, 17.30 Т/с «ВСЕГДА ГОВОРИ «ВСЕГДА»-7» 12+
18.20 Футбол. Чемпионат мира-2014. Отборочный турнир. Россия - Люксембург. Прямая трансляция из Казани
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 «Хит»
22.15 Х/ф «ПАУТИНКА БАБЬЕГО ЛЕТА» 12+
0.10 Х/ф «АЛЕКСАНДРА» 12+
2.25 «Честный детектив» 16+
2.55 Х/ф «ПУТЬ ВОЙНЫ» 16+

**ЧУВАШИЯ**

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.05-9.45 Вместе – мы Россия. Всероссийский фестиваль народного творчества
11.30-11.50 Вести-ПФО
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чăваш ен

**НТВ**

6.00 «НТВ утром»
8.35, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.55 «До суда» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.35 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.30 Ты не поверишь! 16+
20.30 «Хочу V Виа Гру!» 16+
22.50, 0.15 Т/с «КАРПОВ» 16+
23.45 «Егор 360» 16+
1.15 Х/ф «УСКОЛЬЗАЮЩАЯ МИШЕНЬ» 16+
3.00 Т/с «ВИСЯКИ» 16+
4.50 Т/с «ЧАС ВОЛКОВА» 16+

### СУББОТА, 07.09

**ПЕРВЫЙ**

5.30, 6.10 Х/ф «ЭКИПАЖ МАШИНЫ БОЕВОЙ»
6.00, 10.00, 12.00, 18.00 Новости
6.45 Х/ф «ЗВОНЯТ, ОТКРОЙТЕ ДВЕРЬ»
8.20 М/ф «Джейк и пираты Нетландии»
8.50 «Смешарики. Новые приключения»
9.00 «Играй, гармонь любимая!»
9.45 «Слово пастыря»
10.15 «Смак» 12+
10.55 «Все трофеи Елены Прокловой» 12+
12.15 «Идеальный ремонт»
13.10 Х/ф «Д'АРТАНЬЯН И ТРИ МУШКЕТЕРА»
18.15 «Угадай мелодию»
18.45 «Кто хочет стать миллионером?»
19.50 «Минута славы. Дорога на Олимп!» 12+
21.00 «Время»
21.20 «Сегодня вечером» 16+
23.00 «Успеть до полуночи» 16+
23.55 Х/ф «ПЕРЕВОЗЧИК» 16+
1.40 «Тихий дом» на Венецианском кинофестивале. Программа Сергея Шолохова
2.10 Х/ф «АВТОРА! АВТОРА!» 12+
4.15 Т/с «ЗАМОРОЖЕННАЯ ПЛАНЕТА» 12+
5.10 «Контрольная закупка»

**РТР**

4.50 Х/ф «МЕНЯЛЫ» 12+
6.35 «Сельское утро»
7.05 Диалоги о животных
8.00, 11.00, 14.00 Вести
8.20 «Военная программа»
8.50 «Планета собак»
9.25 Субботник
10.05 «Погоня»
11.20 Вести. Дежурная часть
11.55 «Честный детектив» 16+
12.25, 14.30 Х/ф «КУКЛЫ» 12+
16.50 Субботний вечер
18.45, 20.45 Х/ф «ДВА ИВАНА» 12+
20.00 Вести в субботу
23.30 Х/ф «КОГДА ЦВЕТЕТ СИРЕНЬ» 12+
1.20 Горячая десятка 12+
2.30 Х/ф «ПОКРОВИТЕЛЬ» 16+
4.25 Комната смеха

**ЧУВАШИЯ**

8.10-8.20 Вести-Чăваш ен
10.05 Для вас, любимые. Концерт по заявкам
10.50-11.00 Солнечный зайчик (на чувашском языке)
14.20-14.30 Вести-Чувашия

**НТВ**

5.45 Т/с «ДОРОЖНЫЙ ПАТРУЛЬ» 16+
7.25 Смотр 0+
8.00, 10.00, 13.00 Сегодня
8.15 «Золотой ключ» 0+
8.45 Их нравы 0+
9.25 «Готовим с Алексеем Зиминым» 0+
10.20 Главная дорога 16+
10.55 Кулинарный поединок 0+
12.00 Квартирный вопрос 0+
13.25 Следствие вели.. 16+
14.20 «Очная ставка» 16+
15.20 Х/ф «КОДЕКС ЧЕСТИ» 16+
17.20 «Из песни слов не выкинешь!» 12+
18.25 Обзор. Чрезвычайное происшествие
19.00 «Центральное телевидение» с Вадимом Такменевым
19.50 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ» 16+
23.35 Х/ф «ОРУЖИЕ» 16+
1.20 Авиаторы 12+
1.55 Дикий мир 0+
3.00 Т/с «ВИСЯКИ» 16+
5.00 Т/с «ЧАС ВОЛКОВА» 16+

### ВОСКРЕСЕНЬЕ, 08.09

**ПЕРВЫЙ**

5.45, 6.10 Х/ф «ПОЕЗД ДО BROOKLYNA» 12+
6.00, 10.00, 12.00 Новости
7.40 «Армейский магазин» 16+
8.15 М/ф «Аладдин»
8.40 «Смешарики. ПИН-код»
8.55 «Здоровье» 16+
10.15 «Непутевые заметки» 12+
10.35 «Пока все дома»
11.25 «Фазенда»
12.15 М/ф «Ледниковый период»
13.45 Х/ф «КРЕПКИЙ ОРЕШЕК» 16+
16.20 «КВН» Премьер-лига. Финал 16+
18.00 «Ледниковый период»
21.00 Воскресное «Время»
22.00 «Две звезды» Лучшее
0.00 Х/ф «ПЕРЕВОЗЧИК 2» 16+
1.40 Х/ф «ПОСЛЕДНЯЯ ПЕСНЯ» 12+
3.40 Т/с «ФОРС-МАЖОРЫ» 16+
4.30 «Контрольная закупка»

**РТР**

5.25 Х/ф «ЗАКОННЫЙ БРАК»
7.20 Вся Россия
7.30 Сам себе режиссер
8.20 «Смехопанорама»
8.50 Утренняя почта
9.30 «Сто к одному» Неделя в городе
11.00, 14.00 Вести
11.10 «Городок» Дайджест
11.45 Премьера.»Мой папа - мастер»
12.15, 14.30 Х/ф «КОСТЕР НА СНЕГУ» 12+
16.25 «Смеяться разрешается»
18.20 «Наш выход!»
20.00 Вести недели
21.30 Х/ф «Я ТЕБЯ НИКОГДА НЕ ЗАБУДУ» 12+
23.20 Х/ф «СТЕРВА» 12+
1.15 Х/ф «ЭКСПЕРИМЕНТ» 16+
3.20 «Планета собак»
3.55 Комната смеха

**ЧУВАШИЯ**

10.20-11.00 Вести-Чувашия. События недели
**На канале «Россия 2»**
9.20-9.45 Страна спортивная. Чувашия

**НТВ**

6.05 Т/с «ДОРОЖНЫЙ ПАТРУЛЬ» 16+
8.00, 10.00, 13.00 Сегодня
8.15 «Русское лото плюс» 0+
8.45 Их нравы 0+
9.25 Едим дома 0+
10.20 «Первая передача» 16+
10.55 «Чудо техники» 12+
11.25 «Поедем, поедим!» 0+
12.00 «Дачный ответ» 0+
13.25 Следствие вели.. 16+
14.20 «Очная ставка» 16+
15.20 Х/ф «КОДЕКС ЧЕСТИ» 16+
17.20 «Из песни слов не выкинешь!» 12+
18.25 Чрезвычайное происшествие. Обзор за неделю
19.00 «Сегодня. Итоговая программа»
19.50 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ» 16+
23.30 «Луч Света» 16+
0.00 «Школа злословия» Александр Баунов 16+
0.45 Х/ф «БЛОКАДА ЛЕНИНГРАДА» 16+
2.40 Дикий мир 0+
3.05 Т/с «ВИСЯКИ» 16+
5.00 Т/с «ЧАС ВОЛКОВА» 16+

## Администрация Моргаушского района сообщает о наличии земельных участков

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:090401:214, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Москакасинское сельское поселение, д. Полевые Хачики, для установки временных сооружений, площадью 20 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312, 313 и 316, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефоны для справок: 8(83541) 62-2-66, 62-5-99, 62-7-47.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:270203:125, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312, 313 и 316, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефоны для справок: 8(83541) 62-2-66, 62-5-99, 62-7-47.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:071101:66, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д.Охтикасы, для огородничества, площадью 281 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

для пайщиков
СОДРУЖЕСТВО
КРЕДИТНЫЙ ПОТРЕБИТЕЛЬСКИЙ КООПЕРАТИВ
НАМ 10 ЛЕТ
ЗАДАЙТЕ ВОПРОС ПРЕДСЕДАТЕЛЮ ПРАВЛЕНИЯ:
www.sbogdanov.ru
на странице вопрос-ответ
ЗАЙМ ШКОЛЬНЫЙ
Акция
с 1 августа по 15 сентября 2013 г.
СБЕРЕЖЕНИЯ
• выгодные % ставки
с.Моргауши, ул.50 лет Октября, д.23, 2 этаж
62-6-86, 8 900 333 0001

6 сентября с 10 до 11 часов в РДК
Слуховые аппараты
от 6400 до 17000 руб. Запчасти. Выезд на дом бесплатно!
тел. 89225036315 ИП Коробейникова Е. М.
Подбор сертифицированным специалистом.
При сдаче старого аппарата скидка до 2000 руб
И полезные товары: Активатор «Живая-Мертвая» вода. Дыхат. тренажер «Самоздрав». Очки Панкова и бальзам для восстановления зрения. Гриб Копринус от пьянства.
Имеются противопоказания. Проконсультируйтесь у специалиста.

Продаю колодезные кольца, бордюры, поребрики. Бурение колодцев, отверстий, установка опор ЛЭП и др. Тел.: 8-927-668-96-96, 8-917-659-60-60. 7-13.

Цифровое спутниковое телевидение ТРИКОЛОР - 7000 руб. ТЕЛЕКАРТА - 3000 руб. Гарантия. Тел.: 8-905-345-77-19. 20-20.

## Пĕлтерӳсем. Объявления




Хура-шурă тĕслĕ ăратлă ĕнен февраль уйăхĕнче пĕрремĕш пăруламалли тынашкине сутатпăр. Тел: 8-927-858-27-41. 2-2.

* * *

Кăçалхи тюкланă типĕ утă сутатăп.
Тел.: 8-903-379-92-05, 8-919-665-04-32. 2-2.

НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ
Тел.: 8-927-667-40-92. 25-25.

В филиал ООО «Вурнары завод СОМ» (с. Моргауши) требуется приемщик молока (лаборант), зарплата от 10000 руб. Тел.: 8-961-339-11-13, 8-905-028-73-46. 3-4.




ТЕПЛИЦЫ от производителя из сотового поликарбоната 3х6, 3х8 и т. д. Телефоны: 8-917-651-00-76, 8-927-858-28-79.

Ферма юсама ТĔРЛĔ ĔÇ ПУРНĂÇЛАКАНСЕМ (разнорабочие), сварщик, электрик васкавлă кирлĕ. Ĕç укçи вăхăтра тӳлетпĕр. 10000–12000 тенкĕрен кая мар. Кĕрекаç ялĕ. Тел.: 8-987-674-72-84. 3-5.

Спутниковое цифровое телевидение ТРИКОЛОР - 7300 руб. +подарок на 500 руб. ТЕЛЕКАРТА - 3000 руб. Дилер, установщик по району. Тел.: 8-906-385-29-30. 7-10.

ПИЛОМАТЕРИАЛЫ ОБРЕЗНЫЕ ВСЕХ РАЗМЕРОВ. Тел.: 8-903-346-40-58, 8-905-346-63-36. 8-10.



Моргаушское райпо предоставляет услуги крана-манипулятора по погрузке, перевозке и разгрузке тяжёлых и крупногабаритных грузов.

Грузоподъёмность машины 13 тонн, грузоподъёмность крана 7 тонн.

Обращаться по телефонам: 62-2-88 или 8-909-302-71-74 – Евгений.

В продаже имеется широкий ассортимент строительного материала:
- керамзитобетонные блоки (20х20х40);
- железобетонные кольца;
- газосиликатный кирпич;
- силикатный кирпич;
- красный одинарный кирпич.

Магазин «Стройхозтовары», тел.: 62-0-36 или 8-965-686-27-70. 1-3.

БЕТОН, РАСТВОР всех марок. Доставка. Дешево. Тел.: 8-927-668-87-78. 30-43.

ТЦ «ЛОТОС» реализует: цемент – 175 р., профнастил окраш. 213 руб. кв. м., оцинкован. 171 руб. кв. м., трубы б/у для столбов 127 р. пог. м. , профиль 20х20, 40х20, 40х40, поликарбонат тепличный – 1500 р., утеплители, сайдинг, двери стальн. и межкомн. Доставка. Заявка по тел.: 8-917-665-27-26, 48-33-46. 5-10.

ПЕСОК речной, ОПГС (гравмасса), ЩЕБЕНЬ. Доставка. Тел.: 8-927-668-84-40. 30-43.

Услуги буровой машины для бурения колодцев разного диаметра с доставкой и установкой колец. Тел.: 8-903-379-09-01. Вячеслав. 10-10.

Продаю ПЕСОК, ГРАВМАССУ от 10 до 15 тонн. Доставка. Тел.: 8-903-065-60-58. 22-22.

ПРОДАЮ: ОПГС (ГРАВМАССУ), ПЕСОК, ЩЕБЕНЬ ВСЕХ ФРАКЦИЙ. Тел.: 8-937-384-06-50, 8-927-995-07-51. 13-21.

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 5-10.

Продаем пропаренные керамзитобетонные блоки, цемент, керамзит. Адрес: с. Моргауши, «Агропромснаб». Тел.:8-905-340-07-78. 8-10.

пластиковые ОКНА
Немецкое качество
Окна STAR
6-камерный профиль ПО ЦЕНЕ 3-камерного
подробности по телефону:
8-9603101816
скидки до 35%
Пенсионерам доп. скидки
Офис продаж в здании рынка с.Моргауши
Окна стали дешевле...

Немецкие качественные пластиковые окна. Замер, доставка, установка – бесплатно. СКИДКИ.
Тел.: 8-927-844-78-11. 1-10.

* * *

Требуется персонал на новую АЗС, наполнитель баллонов. Тел.: 8(83541)69-8-11. 3-4.

* * *

Продаю: кирпич красный одинарный, полуторный; облицовочный всех цветов; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк; гравмассу; керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352)44-20-97. 8-10.

* * *

Продаю: гравмассу; щебень гранитный, доломитовый, известковый; керамзит; бетон; торф; песок речной, карьерный. С доставкой. Недорого.
Тел.: 8-927-668-70-15. 24-24.

* * *

Пĕчĕк пăру, сурăх туянатăп.
Тел.: 8-905-343-60-63. 5-10.

* * *

Продаю ОПГС (гравмасса), песок.
Тел.: 8-905-199-69-33. 19-19.

* * *

Продам: сетку-рабицу – 600 р., столбы – 200 р., ворота – 3500 р., калитки – 1500 р., секции – 1200 р., профлист. Доставка бесплатная. Тел.: 8-916-140-47-78; 8-916-140-50-48. Продам кузов для газели – от 7000 р. Доставка бесплатная. Тел.: 8-916-548-91-03. 8-10.

* * *

Проекты зданий и инд. домов, электро-, водо- и газоснабжения, сметы. Свид. СРО. ООО «Инттехс», с. Моргауши, ул. Мира, 9А. Тел.: 62-6-03. 4-5.

* * *

Продаю песок, гравмассу, бой кирпича с доставкой.
Тел.: 8-905-347-99-15. 5-10.

* * *

Требуется кредитный специалист, высшее образование. Желателен опыт работы. Зарплата от 12000 руб. в месяц. Тел.: 8-927-667-30-21, 8(8352)222-830.

* * *

Закупаю бычков, овец, молочных телят.
Тел.: 8-905-343-46-23. 6-10.

* * *

Требуются рабочие на производство мебели. З/плата сдельная, своевременная.
Тел.: 8-903-065-50-40, 8-905-343-08-23. 2-2.

* * *

Пĕрремĕш пăруламалли хура-шурă тĕслĕ тынашка сутатăп. Çеçмер ялĕ, Дружная урам, 46 çурт. Бабакина Нина.

* * *

Дорого покупаем волосы 6 сентября (в пятницу) с 9 до 14 час. в парикмахерской «Ольга», ул. Гагарина, д. 2.
Тел.: 8-903-322-20-90.

* * *

Моргаушское райпо предоставляет услуги по изготовлению дубликатов ключей (квартирных, домофонных, автомобильных и т. д.), по заточке кухонного, сельскохозяйственного и столярного инвентаря, по отбивке лезвия косы.

Обращаться по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4 (здание Дома быта, 1 этаж). Тел.: 8-937-379-15-35.

* * *

Иккĕ пăруланă хура-шурă тĕслĕ ĕне сутатăп. Хакĕ калаçса татăлнă тăрăх. Тел.: 8-960-314-03-19.

* * *

Тăваттă пăруланă хĕрлĕ тĕслĕ ĕне сутатпăр.
Тел.: 66-3-71, 8-960-311-05-17.

* * *

Вăкăрсем, тынасем, пăрусем туянатпăр.
Тел.: 8-987-665-02-13. 2-2.

* * *

Продаю двухкомнатную квартиру в с. Моргауши по ул. 50 лет Октября, д. 22, недорого. Тел.: 8-937-956-43-40.

* * *

Продается однокомнатная квартира в центре с. Моргауши в трехэтажном панельном доме, 2 этаж, площадь 31/17/9 кв. м. Цена договорная. Тел.: 8-927-863-38-05.

* * *

Требуются операторы автовесовой на песчаный карьер – Шешкары. Тел.: 8-917-078-86-60. 2-5.

* * *

### ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:072501:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Бабакина Нина Александровна, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Сесмеры, ул. Дружная, д. 46.

Проект межевания земельного участка подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:072501:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение.

С проектом межевания земельного участка можно ознакомиться по адресу: 429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельного участка принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, пр. Московский, д. 37.

## Прогноз погоды

| | суббота 31 августа | | | | воскресенье 1 сентября | | | | понедельник 2 сентября | | | | вторник 3 сентября | | | | среда 4 сентября | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | +13 | +17 | +19 | +14 | +14 | +17 | +21 | +15 | +13 | +17 | +19 | +14 | +14 | +16 | +16 | +12 | +11 | +14 | +16 |
| Давление мм | 748 | 746 | 745 | 743 | 742 | 740 | 738 | 738 | 740 | 739 | 740 | 742 | 744 | 745 | 747 | 749 | 751 | 751 | 751 |
| Влажность % | 100 | 85 | 67 | 84 | 93 | 87 | 78 | 96 | 99 | 89 | 75 | 96 | 100 | 90 | 75 | 86 | 87 | 65 | 53 |
| Ветер м/сек | 1 | 2 | 3 | 4 | 4 | 4 | 3 | 3 | 2 | 3 | 3 | 3 | 3 | 4 | 5 | 2 | 2 | 2 | 4 |
| | Ю-В | В | В | В | Ю-В | Ю-В | Ю | Ю | Ю-З | Ю-З | З | З | С-З | С | С | С-В | С | С | С |
| Солнце восход / заход | | 05:56 | 19:49 | | | 05:58 | 19:46 | | | 06:00 | 19:44 | | | 06:02 | 19:41 | | 06:04 | 19:39 | |
| Луна восход / заход | | 00:29 | 17:03 | | | 01:29 | 17:34 | | | 02:33 | 18:00 | | | 03:40 | 18:23 | | 04:50 | 18:43 | |

Сыпай шкулĕн коллективĕ кунта хуралçă пулса ĕçлекен В.В. Александровăн

**АШШĔ**

чирлесе выртнă хыççăн вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви
ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ” Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

Тĕп редакторшăн В.Л. ШАПОШНИКОВ.

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 2 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Макарова Р.А.
Пичете панă 30.09.2013 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4749.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.